Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1938 АПРЕЛ 9 ШӐМАТКУН
81 (4894)-мӗш №

ЧӐВАШ КОММУНӖ

21-мӗш ҫул тухат̆ ● ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Тӗпӗҫтӑвкомӗн хаҫачӗ ● Пӗр №-рӗ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСӖ:
Город Чебоксары,
ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактӑрӑн 0—67
Ред. заместитӗлӗн 0—88
Редакци секретарӗн 4—40
Дежурнӑйӑн 6—23

Йӗтӗн тухӑҫлӑхне вӑйлӑн ӳстермеле

ССР Сойузӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ „Йӗтӗн-долгунец тухӑҫлӑхне ӳстерес тата унӑн сӳсӗпе вӑрлӑх пахалӑхне лайӑхлатас тӗлӗшпе тумалли ӗҫсем ҫинчен" йышӑннӑ постановлени партире тӑмай тата партире тӑракан мӗн пур бољшевиксене йалхуҫалӑхӗнчи паллӑ отрӑҫӗлре, йӗтӗн ӗрчетес ӗҫре пулнӑ сӑтӑрлӑ ӗҫсен йулашкийӗсене татӑкланах пӗтерме мобилизацилекен документ пулса тӑрат̆. Партин Тӗп комитечӗ тата правитӗлствӑ пирӗн пур работниксене те ҫак куљтурӑн тухӑҫлӑхне ӳстерсе пырас ӗҫри паллӑ ыйтусем ҫине ҫавӑрӑнса пӑхма хушаҫҫӗ. Йӗтӗн ҫинчен йышӑннӑ постановлени—йӗтӗн тухӑҫлӑхне ӳстерсе пымалли уҫӑ программӑ пулса тӑрат̆, пӗтӗм чирчӗрсемпе ҫитменлӗхсене уҫса палӑртат̆, ҫӗнтерӳ тума татӑклӑ ҫул уҫса парат̆.

ССР Сойузӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн постановленине пӗтӗм колхозниксем тата колхозницӑсем пысӑк хапӑл туса йышӑнса илеҫҫӗ, вӑл постановлени пӗтӗмпех пирӗн колхозла хресченӗн тата пирӗн государствӑ интересӗсенчен тухса тӑрат̆.

Йӗтӗн ӗрчетес ӗҫе сӑтӑрҫӑсем хытӑ сийенленӗ. Халӑхӑн усал тӑшманӗсем—пољак-герман шпионӗсем, йӗтӗн мӗнле вырӑн йышанса тӑнине шута илсе, кунта пысӑк сӑтӑрлӑ ӗҫсем тунӑ. Паллӑ йалхуҫалӑх куљтурисем йенӗпе, тырпул тухӑҫлӑхӗ ӳссе пынӑ хушӑрах, икӗ куљтурӑ—йӗтӗнпе кантӑр тухӑҫӗ сахал. 1936—1937 ҫулсенче, сӑмахран вӑтам шутпа гектартан 2,5—2,6-шер центнӗр йӗтӗн сӳсӗ туса илнӗ. Планпа пӑхнӑ тӑрӑх, 4—5 центнӗр илмеле пулнӑ. Ҫӗрӗҫ органӗсем тата чи малтанах ССР Сойузӗн Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗн йӗтӗн тӗп управленийӗ ҫителӗклӗ ӗҫлеменнине пула, йӗтӗн тухӑҫне ӳстерес тӗлӗшпе партипе правитӗлствӑ панӑ директивӑсем пурнӑҫа кӗмесӗр йулнӑ.

Ҫӗрӗҫӗпе хатӗрлев органӗсене, ӑслӑлӑхпа тӗпчев учрежденийӗсене хӗсӗнсе кӗнӗ сӑтӑрҫӑсен тӗп меслечӗсенчен пӗри вӑл—йӗтӗн акмали лаптӑка тӗрӗс мар вырӑнаҫтарса тухни пулнӑ. Хӑшпӗр районсен йӗтӗн ытла та нумай—акмали ҫӗр шутӗнчен 20—25 процент чухлӗ, ытти районсенче 2—4 процента йахӑн кӑна акмала пулнӑ. Ҫакӑн пирки йӗтӗне нумай акнӑ колхозсенче ӑна пухса кӗнӗ чухне пысӑк йаварлӑхсем пулнӑ тата нумай чухнӗ йӗтӗн йур айне йулнӑ. Йӗтӗн сахал акнӑ вырӑнсенче йӗтӗне кайра тӑракан куљтурӑсем вырӑнне шутланӑ, ун ҫине сахал ҫавӑрӑнса пӑхнӑ. Халӑхӑн хайар тӑшманӗсем тунӑ пусуҫаварнӑшӗсем йӗтӗне вӑл килӗштерекен куљтурӑсем ҫине акма май паман, колхоз хирӗсенчен клевӗре хӗссе пынӑ, пур майсемпе те йӗтӗн тухӑҫлӑхне чакарса пынӑ.

Вӑрлӑхлӑх йӗтӗн тӑвас ӗҫре тӑшмансем ытларах сийен тунӑ. Ҫак ӗҫе вӗҫне ҫитийех пӑтраштарса пӗтернӗ. Колхоз уй-хирӗнче тӗрӗсленнӗ лайӑх йӗтӗн сурчӗсем вырӑнне ҫӗнӗ суртсем актарнӑ, анчах та ӗҫре вӑл вӑрлӑхсем сахал тухӑҫ пани курӑннӑ. Сӑмахран, Калинин облӑҫӗнчи, Иваново облӑҫӗнчи Мышкинскӑри йӗтӗн ӗрчетекенсен чапа тухнӑ хаклӑ йӗтӗн сурчӗсене сурт тӗлӗшӗнчен сӑнама тата нумайлатса пыма пӗтӗмпех чарнӑ.

Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ йышӑннӑ постановлени ку йӗркене тӗпренех пӗтерме хушат̆. Ҫӗрӗҫ органӗсем, агрономсем умне, пӗтӗм колхозниксемпе колхозницӑсем умне, пит кирлӗ задачӑсем кӑларса тӑратат̆. Ҫав задачӑсене пурнӑҫа кӗртмелех.

Йӗтӗн вӑрлӑхӗ тӑвассине ҫӗнӗле организацилемеле. Ҫак ҫулта суртлӑ тата вӑрлӑхлӑх акнӑ йӗтӗн 1.450 пин гектар пулмала, 1940 ҫулта пӗтӗм лаптӑк ҫине суртлӑ вӑрлӑх акасси ҫине куҫмала. Йӗтӗн вӑрлӑхӗ тӑвасси государствӑн питӗ те кирлӗ ӗҫӗ пулса тӑрат̆, вӑл ССР Сойузӗн Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗ ҫумӗнче йатарласа тунӑ комиҫҫи йертсе пыни тӑрӑх пулса пымала. Пӗр ҫав комиҫҫи анчах пӗр-пӗр суртлӑ йӗтӗн вӑрлӑхне сӑнаса пӗлме пӑрахӑҫ тӑвасси ҫинчен, ҫӗнӗ сурт йышӑнасси ҫинчен ыйтӑва татса пама пултарат̆. Сурт тӗлӗшпе сӑнамалли пунктсене ҫирӗплетнӗ, йӗтӗн йенӗпе халиччен пулнӑ вӑрлӑх базисене государствӑн районсем хушшинчи йӗтӗн вӑрлӑхӗ тӑвассипе ӗҫлекен станцисем туса урӑхлатнӑ. Вӗсем вӑрлӑх ӗрчетекен хуҫалӑхсемпе таччӑн ҫыхӑнса тӑраҫҫӗ. Ҫапла ӗнтӗ, колхозсене суртлӑ вӑрлӑхсене шанчӑклӑ тата пӗрмайах парса тӑма пурне те тунӑ. Государствӑ суртлӑ йӗтӗн вӑрлӑхӗ ӗрчетес ӗҫе хайӗн аллине илчӗ, ӑна вӑл анлӑ ҫул ҫине кӑларат̆!

Йӗтӗн ӗрчетес ӗҫре тӗрӗс агротехникӑ, агрономи йенчен йертсе пырасси тата тӗрӗслесе пырасси кирлӗ. Ҫакӑн пек ӗҫе, сӑмахран акӑнакан йӗтӗнӗн виҫ пайӗнчен пӗр пайне ытларах, агротехникӑ йенчен лайӑх вӑхӑтра тата кӗрхи ҫӗртме тунӑ вырӑна мар, сурхи суха тунӑ вырӑна акнине нийепле те чӑтма ҫук. Йӗтӗн акса тӑвакан колхозӑн агротехникӑлӑ йӗркесене лайӑх пӑхӑнса ӗҫлекен куљтурӑлӑ хуҫалӑх пулмала. ССР Сойузӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ йӗтӗне мӗнле акмалли мӗнле пӑхса тӑмалли, мӗнле пухса кӗмелли ҫинчен кашни колхоза ҫирӗп тата татӑклӑ кӑтартусем парса тӑмала тӑвас майпа, ҫӗрӗҫ органӗсене йӗтӗн-долгунец йенӗпе агротехникӑлӑ йӗркесем туса хатӗрлеме хушрӗ. Колхозӑн уйрӑмлӑхне тата ҫӗрне хисепе илсе панӑ кӑтартусем йӗтӗн тухӑҫне ӳстерес ӗҫре татӑкла вырӑн йышӑнӗҫ.

Правитӗлствӑ решенийӗнче колхозниксемпе колхозницӑсен ӗҫне организацилесси ҫине пысӑк тимлӗхпе пӑхнӑ. Бригадӑра 5—7 ҫынран звеносем организацилесе практикӑра анлӑн усӑ курмала. Звено ҫумне йӗтӗн участкине ҫирӗплетсе параҫҫӗ, вӑл звено ҫав участӑк ҫинче ҫулӗпех, йӗтӗн продукцине туса париччен ӗҫлет. Звенйевойсемпе звено членӗсене преми памала туни колхозниксемпе колхозницӑсен йӗтӗн тухӑҫлӑхне ӳстерес кӑмӑлне ҫӗклет. Сӑмахран, контрактаци йӗркипе колхоз пама йышӑннӑ сӳсе, вӑрлӑха, ҫурӑмне планран иртерсе панӑ звенйевойне тата звено членне, мӗн чухлӗ ытларах тултарнине хисепе илсе, ӗҫкунӗсем ҫумне 20—30 ӗҫкунӗ хушса памала. Колхоз контрактаци планне иртерсе тултарнишӗн преми-надбавкӑ илет пулсан, ҫуррине пӗтӗм колхоз членӗсем хушшинче, ҫуррине йӗтӗн патӗнче ӗҫлесе тунӑ ӗҫкунӗсем шучӗпе плана иртерсе тултарнӑ звенора ӗҫлекенсене валеҫсе параҫҫӗ.

Ҫапла ӗнтӗ, нумайрах тата чи лайӑх пахалӑхлӑ продукци парас тӗлӗшпе колхозниксем питех те интересленеҫҫӗ!

Йӗтӗн тӑвакан районсем—ҫураки умӗнче. Парти тата совет организацисем умӗнче йӗтӗн тӗлӗшпе партипе правитӗлствӑ йышӑннӑ постановленисем ҫинчен пӗтӗм колхозниксемпе - колхозницӑсене ӑнлантарса парас задачӑ тӑрат̆. Ҫак решенисем ҫине ҫуракине лайӑх иртерессишӗн, пысӑк тухӑҫлӑ йӗтӗншӗн, пахалӑхлӑ йӗтӗн сӳсӗшӗн колхозсем, бригадӑсем тата звеносем хушшинче ӑмӑрту ӗҫне сарса йанипе ответлемеле.

„Йӗтӗн туса илес ӗҫре епӗр пит те кайа йулнӑ,—терӗ Молӑтӑв йулташ ҫӗрӗҫӗнчи йертсе пыракан работниксен канашлӑвӗнче.—Кунга тухӑҫлӑх намӑслантармалах сахал. Ӑна, сыљтӑмла-троцкисла тата есерла сӑтӑрҫӑсенчен йулнӑ йапалана, пӗтерес пулат̆. Тавайӑр-ха йӗтӗн тухӑҫлӑхне хӑпартассишӗн кӗрешӗве лайӑх, мӗлйуншар колхозниксем тата пирӗн пӗтӗм государствӑ ыйтни пекех лайӑх сарса йарар".

Иккӗленмели ҫук, 1938 ҫулта Совет ҫӗршывӗнчи йӗтӗн ӗрчетес ӗҫ пысӑк ҫӗнтерӳ тӑвӗ. Пирӗн обйазаннӑҫ ҫав ҫӗнтерӗве организацилессинче, сӑтӑрҫӑла ӗҫсен йулашкийӗсене пӗтӗмӗшпех тата вӗҫне ҫитийех пӗтерессинче пулат̆.

(„Правда" умстатйинчен).

1938 ҫулта йӗтӗн тата кантӑр контрактацилемели план ҫинчен

Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ПСК(б)П Облӑҫ Комитечӗ йышӑннӑ
ПОСТАНОВЛЕНИ

ССР Сойузӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ПСК(б)П Тӗпкомӗ 1938 ҫулти мартӑн 22-мӗшӗнче „1938 ҫулта йӗтӗн тата кантӑр контрактацилемели план ҫинчен" йышӑннӑ постановленипе килӗшӳлӗн, Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ПСК(б)П Облӑҫ Комитечӗ ҫапла йышӑнаҫҫӗ:

I. Йӗтӗн контрактацилесси тӑрӑх

1. Халиччен пулнӑ нормӑсене пӗтӗмлетсе, контрактаци тӑрӑх йӗтӗн сӳсӗ тата йӗтӗн вӑрри гектартан парассин ҫакӑн пек ҫӗнӗ нормисене ҫирӗплетес (килогрампа—районсем тӑрӑх вӑтам шутпа):

РАЙОНСЕМ	Йӗтӗн сӳсне шутласа	Йӗтӗн вӑрри
Улатӑр районӗ тӑрӑх	108	60
Елӗк „ „	—	—
Патӑрйел „ „	—	—
Вӑрнар „ „	93	77
Йӗпреҫ „ „	93	77
Ишлей „ „	—	—
Канаш „ „	—	—
Куславкка „ „	—	—
Хӗрлӗ Чутай „ „	75	77
Кувакинӑ „ „	108	60
Сӗнтӗрвӑрри „ „	—	—
Пӑрачкав „ „	108	60
Турхан „ „	93	77
Тутаркас „ „	—	—
Трак „ „	—	—
Вӑрмар „ „	—	—
Ҫӗрпӳ „ „	—	—
Шупашкар „ „	—	—
Шӑмӑршӑ „ „	—	—
Шӑхасан „ „	—	—
Шӑнкӑртам „ „	75	77
Ҫӗмӗрле „ „	108	60
Йелчӗк „ „	—	—
Йетӗрне „ „	93	77
Тӑвай „ „	—	—

2. Акмали ҫӗр талккӑшӗн планӗпе тата ССРС Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ПСК(б)П Тӗпкомӗ тунӑ нормӑсемпе килӗшӳлӗн, 1938 ҫулта акӑнакан йӗтӗне контрактацилес плана ҫакӑн пек хисеппе тӑвас:

йӗтӗн сӳспе шутласа 3000 цент.;
вӑл шутран: тылламан йӗтӗн 1,2 вӑтам номӗрлӗ сӳс ҫине куҫарса 2000 цент.;
килте алӑпа ӗҫлесе хатӗрленӗ 7,0 вӑтам номӗрлӗ йӗтӗн сӳсӗ . 1000 „
Йӗтӗн вӑрри . . . 2000 „

Йӗтӗн сӳсне тата йӗтӗн вӑррине контрактацилес плана районсем тӑрӑх ҫакӑн пек валеҫсе панине ҫирӗплетес:

РАЙОНСЕМ	Пӗтӗмпе сӳспе шутласа (центнӗрпа)	Вӑл шутран: Йӗтӗн сӳсӗ: Центнӗрпа	Вӑл шутран: Йӗтӗн сӳсӗ: Вӑтам номӗр	Вӑл шутран: Тылламан йӗтӗн: Сӳспе шутласа (цент.)	Вӑл шутран: Тылламан йӗтӗн: Йавӑрӗ центнӗрпа	Вӑл шутран: Тылламан йӗтӗн: Вӑтам номӗр	Вӑрлӑх центнӗрпа
Улатӑр	378	—	—	378	1701	1,2	210
Елӗк	—	—	—	—	—	—	—
Патӑрйел	—	—	—	—	—	—	—
Вӑрнар	230	152	6.5	78	351	1,2	191
Йӗпреҫ	209	209	7,5	—	—	—	171
Ишлей	—	—	—	—	—	—	—
Канаш	—	—	—	—	—	—	—
Куславкка	—	—	—	—	—	—	—
Хӗрлӗ Чутай	195	195	6,5	—	—	—	199
Кувакинӑ	486	—	—	486	2187	1,2	270
Сӗнтӗрвӑрри	—	—	—	—	—	—	—
Пӑрачкав	594	—	—	594	2673	1,2	330
Турхан	195	195	7,5	—	—	—	160
Тутаркас	—	—	—	—	—	—	—
Трак	—	—	—	—	—	—	—
Вӑрмар	—	—	—	—	—	—	—
Ҫӗрпӳ	—	—	—	—	—	—	—
Шупашкар	—	—	—	—	—	—	—
Шӑмӑршӑ	—	—	—	—	—	—	—
Шӑхасан	—	—	—	—	—	—	—
Шӑнкӑртам	19	19	6,5	—	—	—	19
Ҫӗмӗрле	464	—	—	464	2088	1,2	258
Йелчӗк	—	—	—	—	—	—	—
Йетӗрне	230	230	7,5	—	—	—	—
Тӑвай	—	—	—	—	—	—	192
ПӖТӖМПЕ	3000	1000	—	2000	9000	—	2000

II. Кантӑр контрактацилесси тӑрӑх

4 Контрактаци тӑрӑх гектартан кантӑр вӑрри тата сӳс парассин ҫак нормисене ҫирӗплетес (килогрампа—районсем тӑрӑх вӑтам шутпа):

РАЙОНСЕМ	Кантӑр сӳсӗ	Кантӑр вӑрлӑхӗ
Улатӑр районӗ тӑрӑх	—	—
Елӗк „ „	90	78
Патӑрйел „ „	90	78
Вӑрнар „ „	90	78
Йӗпреҫ „ „	90	78
Ишлей „ „	90	78
Канаш „ „	90	78
Куславкка „ „	80	78
Кувакинӑ „ „	—	—
Хӗрлӗ Чутай „	80	78
Сӗнтӗрвӑрри „	80	78
Пӑрачкав „ „	—	—
Турхан „ „	80	78
Тутаркас „ „	90	78
Трак „ „	90	78
Вӑрмар „ „	80	78
Ҫӗрпӳ „	80	78
Шупашкар „	80	78
Шӑмӑршӑ „	80	78
Шӑхасан „	90	78
Шӑнкӑртам „	80	78
Ҫӗмӗрле „ „	80	78
Йетӗрне „ „	80	78
Йелчӗк „ „	90	78
Тӑвай „ „	80	78

5. Акмали ҫӗр талккӑшӗн планӗпе тата гектартан пама тунӑ нормӑсемпе килӗшӳлӗн, 1938 ҫулта акӑнакан кантӑра контрактацилес плана ҫакӑн пек хисеппе ҫирӗплетес:

Кантӑр сӳсӗ 5500 центнӗр;
Вӑл шутран: тылламан кантӑр 0,72 вӑтам номӗрлӗ сӳспе шутласан 2.000 „
5,1 вӑтам номӗрлӗ кантӑр сӳсӗ 3.500 „
Кантӑр вӑрри 5.000 „

6. Кантӑр контрактацилес плана районсем тӑрӑх ҫакӑн пек валеҫнине ҫирӗплетес:

РАЙОНСЕМ	Пӗтӗмпе сӳспе шутласа центнӗрпа	Вӑл шутран: Кантӑр сӳсӗ: Центнӗрпа	Вӑл шутран: Кантӑр сӳсӗ: Вӑтам номӗр	Вӑл шутран: Тылламан кантӑр: Сӳспе шутласа центнӗрпа	Вӑл шутран: Тылламан кантӑр: Хӑйӗн йавӑрӗш центнӗрпа	Вӑл шутран: Тылламан кантӑр: Вӑтам номӗр	Кантӑр вӑрлӑхӗ
Улатӑр	—	—	—	—	—	—	—
Елӗк	701	—	5,2	701	4556	0,72	610
Патӑрйел	324	324	5,2	—	—	—	282
Вӑрнар	306	90	5,2	216	1404	0,72	266
Йӗпреҫ	207	207	5,2	—	—	—	180
Ишлей	310	258	5,2	52	338	0,72	272
Канаш	207	207	4,9	—	—	—	180
Куславкка	96	96	4,9	—	—	—	94
Хӗрлӗ Чутай	264	56	4,9	208	1352	0,72	258
Кувакинӑ	—	—	—	—	—	—	—
Сӗнтӗрвӑрри	88	88	4,9	—	—	—	86
Пӑрачкав	—	—	—	—	—	—	—
Турхан	144	144	4,9	—	—	—	140
Тутаркас	468	225	5,3	243	1580	0,72	407
Трак	355	167	5,2	188	1222	0,72	308
Вӑрмар	216	216	4,9	—	—	—	210
Ҫӗрпӳ	256	256	4,9	—	—	—	250
Шупашкар	160	160	4,9	—	—	—	156
Шӑмӑршӑ	92	92	4,9	—	—	—	90
Шӑхасан	243	243	5,2	—	—	—	210
Шӑнкӑртам	48	48	4,9	—	—	—	47
Ҫӗмӗрле	112	32	4,9	80	520	0,72	110
Йелчӗк	315	315	5,2	—	—	—	271
Йетӗрне	388	76	4,9	312	2028	0,72	378
Тӑвай	200	200	4,9	—	—	—	195
Пӗтӗмпе	5.500	3.500	—	2.000	13.000	—	5.000

7. Йӗтӗнпе кантӑра контрактацилессин ҫак постановленипе ҫирӗплетнӗ планӗсем ҫавӑнпа пӗрлех вӑл куљтурӑсене хатӗрлессин планӗсем те пулса тӑмала тӑвас.

8. Райӗҫтӑвкомсене йӗтӗнпе кантӑра контрактацилемели плана колхозсем патне ҫитерн чух йӗтӗне тата кантӑра контрактацилени тӑрӑх гектартан памали нормӑна виҫӗ тӗрлӗрен ытла мар тума тата ҫак постановленипе район тӑрӑх тунӑ вӑтам нормӑна улӑштарни пулмала мар тума асӑрхаттарас.

9. Контрактаци договӑрӗ ҫине алӑ пусна чухне колхозсене йӗтӗн тата кантӑр контрактацилени тӑрӑх контрактациленекен сӳс тата тылламан кантӑрпа йӗтӗн хакӗн, ҫавӑн пекех вӑрлӑх тума акнӑ ҫӗрти контрактациленекен вӑрлӑх хакӗн 20 процентӗ чухлӗ аванс памала тӑвас.

10. Колхозсене йӗтӗн тата кантӑр вӑрлӑхӗн ссуди тӑрӑх пулнӑ, 1938 ҫулта парса татмали парӑмсене тӳлес вӑхӑта виҫӗ ҫуллӑ срукла тӑсса парас, 1938 ҫулта акнинчен—30 процент, тата йулашки 70 процентне пӗр пек пайсемпе—1939 ҫулта тата 1940 ҫулта акнӑ кантӑрпа йӗтӗне парса тӳлесе татмала тӑвас.

11. Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ПСК(б)П Обкомӗ парти тата совет организацисене йӗтӗн тата кантӑр ӗрчетес ӗҫе бољшевикла тытӑнма, кӑҫалхи ҫуллах та ӗнтӗ йӗтӗнпе кантӑр тухӑҫлӑхне тата пахалӑхне татӑкланах хӑпартассине ӗҫре пурнӑҫа кӗртес майпа, колхозсем тытса тӑракан питӗ те пысӑк резервӑсене вӑйлӑ тухӑҫлӑх туса илес тата колхозсемпе колхозниксен тупӑшне ӳстерес ӗҫе мобилизацилеме хушшаҫҫӗ.

Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн председателӗ **Л. СПАСӐВ.**

ПСК(б)П Облӑҫ Комитечӗн ҫекретарӗ **Г. ИВАНОВ.**

1938 ҫулти апрелӗн 2-мӗш.

Испанири фронтсенче

Испанин оборонӑ министерстви пӗлтернӗ тӑрӑх, апрелӗн 3-мӗшӗнче ҫӗрле, Хӗвелтухӑҫри (Арагонири) фронтра марокканӗцсем тата Италипе Германи интервенчӗсем Леридӑн кӑнтӑрпа хӗвеланӑҫ хӗррине кӗрсе кайса вокзала йышӑнса илнӗ. Республикӑ чаҫӗсем хуларан тухса кайса, Леридӑ тулашӗнче ҫӗнӗ позицисенче ҫирӗпленсе вырнаҫнӑ. Пӑлхавҫӑсем хуларан ҫурҫӗр йенче виҫӗ йала йышӑнса илнӗ.

Ебро йуханшывӗран кӑнтӑр йенче фашиссем хӑйсен малти линийӗсене Мора де Ебро патне ҫитиччен илсе пыма пултарнӑ. Ҫак районра Италин чаҫӗсем малала кайасси фашиссен 100 самољочӗ республиканӗцсен линийӗ ҫине татти-сыпписӗр бомбӑсем пӑрахса тӑнипе ҫеҫ пулма пултарнӑ.

Фашиссен авиацийӗ республикӑ тылӗнчи йалсем ҫине халь те бомбӑсем пӑрахса тӑрат̆.

Центӑрти фронтра, Гвадалахарӑ ҫектӑрӗнче республиканӗцсен ҫарӗсем активлӑн малала кайса пыраҫҫӗ. 17 километр тӑршшӗ фронтра республиканӗцсем апрелӗн 3-мӗшӗнче тӑхӑр километр малала кайнӑ. Йӗркерен тухса кайала чакса пыракан пӑлхавҫӑсен чаҫӗсене республиканӗцсен утлӑ ҫарӗ хӑваласа пырса нумай ҫынна тыткӑна илнӗ тата вӑрҫӑ хатӗрӗсене туртса илнӗ.

Республиканӗцсен ҫӗнӗ позицийӗсем мӗн пур сӑртлӑ районра пуҫпулса тӑраҫҫӗ тата малала наступлени тума паха пунктсем шутланаҫҫӗ.

Республикӑ ҫарӗсем кӑнтӑр фронтӗнче Игуйера де Калатрава йенеле ӑнӑҫлӑн наступлени туса пыраҫҫӗ. Республиканӗцсем вӑрҫӑ хатӗрӗсене чылай туртса илнӗ.

***

Испанирен пӗлтернӗ тӑрӑх, Хӗвелтухӑҫри (Арагонири) фронтра Леридӑ хулинчен ҫурҫӗр йенче фашиссем, наступлени тумалли пур майсемпе те усӑ курса, халь те атакӑсем тӑваҫҫӗ. Республикӑ ҫарӗсем Балагер йалӗ тӗлӗнче Сегре йуханшывӗн сулахай ҫыранне хӳтлесе тӑраҫҫӗ.

Республикӑ авиацийӗ чылай хутчен разведкӑлӑ вӗҫевсем туса иртернӗ, ҫавӑн пек вӗҫнӗ чухне бомбӑсем пӑрахса тата пулеметсенчен персе фашиссен капланса тӑнӑ ҫарӗсене чылай ҫӗмӗрнӗ. Республикӑ љочикӗсем фашиссен пӗр самољотне персе ӳкернӗ.

Центрти фронтра Гвадалахарӑ районӗнче ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ. Естремадурӑ йенче, Толедоран хӗвеланӑҫнеле, республикӑ ҫарӗсем Ла Калера йалне тата ҫав йал ҫывӑхӗнчи ҫӳлӗ вырӑнсене йышӑнса илнӗ. Республиканӗцсем икӗ йала хупӑрласа илнӗ.

(ТАСС).

КИТАЙРИ ВӐРҪӐ

Китай ҫарӗсен пысӑк ҫӗнтерӗвӗ

ХАЊКОУ, апрелӗн 7-мӗшӗ (ТАСС). Енер каҫхине Китай ҫарӗсем Тайерчжуан районӗнче наступлени тума пуҫланӑ. Йапони ҫарӗсен мала тӑратнӑ 700 ҫынлӑ отрйадне ҫӗмӗрсе тӑкса, Китай ҫарӗсем Тайерчжуан хулине тытса илнӗ, Йапони ҫарӗсене хытӑ ҫӗмӗрнӗ. Апрелӗн 7-мӗшӗнче ирхине Китай ҫарӗсем малала наступлени туса, йапонӗцсене Тайерчжуанран ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнеле хӗстерсе пынӑ. Китай ҫарӗсен колонни Великий канал урлӑ каҫнӑ та вирлӗн ҫапӑҫса Нањлона пырса кӗнӗ (Тайерчжуанран ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫ йенче 5 километрта). Лињчен — Тайерчжуан фронтӑн пӗтӗм тӑршшӗнче йапонӗцсем ҫурҫӗр йеннеле чакаҫҫӗ. Тайерчжуан патӗнчи ҫапӑҫусенче йапонӗцсен вилнисемпе аманнисем 20 пин ҫынна йахӑн пулнӑ. Китай ҫарӗсем 20 пин ытла винтовкӑ, 931 пулемет, 77 тупӑ, вӑрҫӑ хатӗрӗсем, 30 грузовик туртса илнӗ.

„Плебисцита" фашисла хатӗрленни

Парижри хаҫатсем пӗлтернӗ тӑрӑх, апрелӗн 10-мӗшӗнче „плебисцит" (пӗтӗм халӑхран ыйтса тухни) пулнӑ май, Германире массӑлӑ террор вӑйланса пырат̆. Ҫурҫӗр Германин чылай хулисенче фашисӑма хирӗҫ тӑракан пит нумай ҫынсене арӗсленӗ. Гамбургри предприйатисенче Гестапо вӑтӑр рабочине арӗсленӗ, вӗсене Австрине туртса илнине хирӗҫ сасӑлама чӗнекен вӑрттӑн листовкӑсем салатнӑ, тесе айӑпланӑҫҫӗ. Ҫӗвӗ хапрӑкӗнчи рабочисемпе работницӑсен ушкӑнне тата верфри 12 рабочине те ҫав сӑлтавпах арӗсленӗ.

Австрире „Плебисцита" хатӗрленнине Венӑ ҫывӑхӗнче ҫӗнӗрен пысӑк концентрацилӗ лагӗр уҫнипе паллӑ тунӑ. Гитлӗровӗцсем халӑха пур майсемпе те хӑратаҫҫӗ. „Рабочисем суйлав участкисене организацилӗн пырасси" ҫинчен распорйажени кӑларнӑ. Савӑт коллективӗсем суйлав участкисене пырассишӗн ответлӑха предприйати хуҫисем ҫине хунӑ. (ТАСС).

КӖСКЕН

● Испанине пулӑшакан Белги делегацийӗ Барҫелонӑна пынӑ. Делегаци составӗнче виҫӗ коммунис, 7 социалис, икӗ партире тӑман ҫын. Делегаци 11 грузовик тата 100 тоннӑ апат-ҫимӗҫ илсе пынӑ.

● Бермен хулинче (Германи) фашисӑма хирӗҫ тӑракан 150 ҫынна суд тунӑ, вӗсене „государствӑна сутнӑшӑн" айӑплана. Айӑпланакансене пурне те тӗрлӗрен срукла тӗрмене хупмала тунӑ.

Испани пӑлхавҫисене Францирен пулӑшаҫҫӗ

Франциri чукунҫулсем ҫинче ӗҫлекенсен сойузӗн бӳровӗ резољуци йышӑннӑ, вӑл резољуцире бӳро йулашки кунсенче Испани пӑлхавҫисене Францирен пулӑшса тӑрасси вӑйланнине хирӗҫ протестлет. Тӑватӑ кун хушшинче кӑна франци чикки урлӑ Испани пӑлхавҫисем патне 108 штук грузовиксемпе автомобилсем йанӑ. Чукунҫул ҫинче ӗҫлекенсен сойузӗ пӑлхавҫӑсем туртса илнӗ территори ҫумӗнчи чикӗсене хупма ыйтат̆.

(ТАСС).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

ПСК(б)П Шупашкар хула комитечĕн пленумĕ

Апрелĕн 7-мĕшĕнче ПСК(б)П Шупашкар хула комитечĕн пленумĕ пулса иртрĕ. Партин йертсе пыракан органĕсен суйлавĕсене иртересси çинчен ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ тата парти Обкомĕн пленумĕ йышăннă решенисем тăрăх парти Обкомĕн тата хула комитечĕн пĕрремĕш секретарĕ Иванов йулташ доклад туса парчĕ.

Иванов йулташ доклачĕ тăрăх прениро Петров (Сыхăну управленийĕнчи парторг), Назарăв (Садвинтрест), Александрăв (Кирпĕч савăтĕнчи парторг), Атлашĕвă (хула комитечĕн инструкторĕ), Лапин (Хула комитечĕн виççĕмĕш секретарĕ), Калинкина (Шупашкар хула совечĕн председателĕ), Чиганайĕв (Стройтрест), Соколовă (хула комитечĕн инструкторĕ). Бурков („Красная Чувашия" хаçат редакцийĕ) йулташсем тухса каларĕç.

Пленум парти Тĕпкомĕн тата парти Чăваш Обкомĕн пленумĕ партин йертсе пыракан органĕсен суйлавĕсене иртересси çинчен йышăннă решенисене пурласа, парторганизацисене çак решенисене большевикла пурнăçа кĕртме хушрĕ.

Пленум Шупашкарти пуçламĕш парторганизацисене ПСК(б)П Тĕпкомĕ партин йертсе пыракан органĕсен суйлавĕсене иртересси çинчен йышăннă постановленине вĕренине пĕрлех пур коммунисcене те суйлавсен политикăлă задачисем çинчен аплăн ăнлантарса пама хушрĕ.

Пленум йышăннă тăрăх, партком секретарĕсен, парторгсен апрелĕн 11-мĕш тĕлне партин пуçламĕш организацисен ĕçĕсем çинчен отчотсем çырса хатĕрлемеле.

Партин пуçламĕш организацисенчи отчотпа суйлав пухăвĕсем майăн 15-мĕшĕнчен пымала. Пуçламĕш организацисенче суйлав пухăвĕсем хăçан пулассине, апрелĕн 8-мĕшĕнчен кайа йулмасăр, хула комитетне пĕлтермеле.

Хула комитечĕ пур пуçламĕш парторганизацисенче те хăйĕн ĕçĕсем çинчен отчотсем туса парат.

Пленум çакна уйăрмах палăртса хăварчĕ: партин йертсе пыракан органĕсен суйлавĕсене иртерни коммунисcен большевикла сыхăлăхне татах та хăпартмала. Троцкиссене, бухаринĕçсене, буржуалă-националиссене, халăхăн тата ытти тăшманĕсене тăрă шыв çине кăларма, вĕсене тĕнĕ-тымарĕпех кăкласа пыма, сăтăрлăх сийĕнĕсене пĕтерме тата парторганизацисен умĕнче тăракан политикăла-хуçалăхла задачăсене ăнăçлăн пурнăça кĕртме парторганизацине мобилизацилемеле.

Пленум Шупашкарти парторганизацинче тăракан коммунисcене партин йертсе пыракан органĕсен суйлавĕсене иртерни чух идейăна политикă тĕлĕшĕнчен çÿлĕ вырăнта пулма чĕнет.

Комсомолĕçсем партине кĕреççĕ

КУСЛАВККА (хамăр корр). Комсомолăн районри пуçламĕш организацисенче ПСК(б)П Тĕпкомĕн йанвари пленумĕ тата ПСÇЛКС Тĕпкомĕн V-мĕш пленумĕ йышăннă решенисене сÿтсе-йавнă май, малта пыракан комсомолĕçсем хушшинче партийе кĕрес туртăм ÿссех пырат. Комсомол организацийĕ политикăлă тата производствăлă ĕçсенче тĕрĕсленнĕ активлă комсомолĕçсене парти ретне кĕме рекомендацисем парат.

ПСК(б)П Тĕпкомĕ партине çĕнĕрен илессине пуçарса йарасси çинчен йышăннаранпа 40 комсомолĕçа партине кĕме рекомендацисем панă. Вĕсенчен чылайĕшне парти ретне илнĕ.

Парти ретне кĕрекен комсомолĕçсем ССР Союзĕн Верховнăй Советне суйлама хатĕрленнĕ вăхăтра агитатăрсем пулса ĕçленĕ. Нумайĕшĕ хальхи вăхăтра та РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисемпе Конституцисем çинчен халăха ăнлантарас тĕлĕшпе агитатăрсем пулса ĕçлеççĕ.

Кормилицин—комбинатри силовой станцинче ĕçлекен стахановĕц Вăл рабочисем хушшинче суйлав саккунĕ çинчен калаçусем иртерет. Ăна халĕ партине илнĕ.

Гераçимăв—комсомол райкомĕнче пионерсен пайĕн пуçлăхĕ пулса ĕçленĕ, халĕ политвĕренÿ пайĕн пуçлăхĕ, çав вăхăтрах пропагандис пулса ĕçлет. Ăна партине илнĕ.

Терентйĕв—Варасăрти туллимар вăтам шкул директăрĕ пулнă, халĕ райĕçтăвкомăн çутĕç пайĕн пуçлăхĕ, ăна та парти ретне илнĕ.

Йелчĕкри вăтам шкулта учитĕл пулса ĕçленĕ, халĕ туллимар вăтам шкул директăрĕ пулса ĕçлекен Мишин йулташа та партине илнĕ.

Хальхи вăхăтра МТС механикĕ Елехин, комбайнерка Айдаравă, комбинатри стахановĕц Алексейĕв йулташсем партине кĕме хатĕрленеççĕ.

Анчах партине илес ĕçре чăрмавсем те пур. Комсомол райкомĕ ĕçре тĕрĕсленнĕ, активлă комсомолĕçсене партине кĕме пулăшас вырăнне, чăрмантарат. Акă, Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн Куславкка районĕнчи уйрăмĕнче ĕçлекен комсорг Михайлăв рекомендаци ыйтса райкомала зайавлени панă. Райкомол ку ĕçе татса памасăр тытса тăрат. Райкомол рекомендаци пама йышăнсан та, хăшпĕр комсомолĕçсем вăл рекомендацисене райкомола ик-виç хут пымасăр илеймеççĕ. Ку çитменлĕхе пĕтерес пулат.

Н. Петров.

Нимĕнле ответ та çук

ШАМĂРША. Васанти туллимар вăтам шкулта вĕрентекен учитĕле П. Степанăва жалăбăсем тăрăх комсомол ретĕнчен кăларнă. Вăл комсомолăн Шăмăршă райкомне апелляци панă. Унтанпа ĕнтĕ виçĕ уйăх иртсе кайрĕ. Анчах халĕ те Степанăва нимĕнле ответ та памаççĕ.

А. Вазанăв.

Партин йертсе пыракан органĕсене суйлама хатĕрленеççĕ

(Телефон тăрăх)

ВĂРНАР районĕ

ПСК(б)П Вăрнар райкомĕ парторгсемпе кандидат - групписен руководителĕсен канашлăвне ирттернĕ. Канашлура ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ партин йертсе пыракан органĕсен суйлавĕсене иртересси çинчен йышăнна постановленине тата суйлавсене иртермели плана сÿтсе-йавнă.

Апрелĕн 15-мĕшĕнче отчотпа суйлав пухăвĕсем пуçланаççĕ. Районра партин пуçламĕш организацисем 14, кандидат групписем 6. Парти райкомĕ пур пуçламĕш организацисенче те отчотсем тума шутлат. Парторгсене отчотсем хатĕрлеме пулăшма районри парти активĕн членĕсене хушнă. Райком инструктăрĕсем те парторгсене отчотсем хатĕрлеме пулăшаççĕ. Хальхи вăхăтра пуçламĕш парторганизацисенче ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ партин йертсе пыракан органĕсен суйлавĕсене иртересси çинчен йышăннă постановленине сÿтсе-йаваççĕ.

ÇĔРПӲ районĕ

Райĕçтăвком, МТС, сăнав станци çумĕнчи тата ытти парти организацисем партин Тĕп Комитечĕ партин йертсе пыракан органĕсен суйлавĕсене иртересси çинчен йышăннă постановленине сÿтсе йавнă.

Апрелĕн 5-мĕшĕнче Çĕрпÿ райкомĕ парторгсен канашлăвне ирттернĕ. Ку канашлура партин йертсе пыракан органĕсен суйлавĕсене иртересси çинчен сÿтсе йавнă тата партин йертсе пыракан органĕсене суйламали инструкцине ăнлантарса панă. Канашлура—парторгсен апрелĕн 10-мĕш тĕлне отчотсем хатĕрлемеле, тенĕ. Райком членĕсем тата инструктăрсем парторгсене отчотсем хатĕрлеме пулăшаççĕ.

Апрелĕн 10-мĕшĕнче районри коммунисcен пухăвне тума палăртнă. Пухура партин йертсе пыракан органĕсен суйлавĕсене иртермели плана сÿтсе-йаваççĕ, тата ПСК(б)П Обком пленумĕн итогĕсем çинчен доклад пулат.

Райком планĕ тăрăх апрелĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа 25-мĕшне çитиччен партин пуçламĕш организацисенче, кандидатсен групписенче те отчотпа суйлав пухăвĕсем иртеççĕ. Парти райкомĕ халĕ партин пуçламăш организацисенче отчот тума хатĕрленет.

КУСЛАВККА районĕ

Апрелĕн 5-мĕшĕнче райком бюровĕн ларăвĕ партин йертсе пыракан органĕсен суйлавĕсене иртермели плана пăхса тухнă. Ку план тăрăх апрелĕн 19-мĕшĕнчен пуçласа 23-мĕшне çитиччен пуçламĕш парторганизацисенче тата кандидат групписенче отчотпа суйлав пухăвĕсем пулмала.

Пур парторганизацисенче те райком отчочĕ пулат. Малтанхи отчот парти райкомĕ çумĕнчи пуçламĕш парторганизацинче, апрелĕн 13-мĕшĕнче пулат.

Апрелĕн 7-мĕшĕнче район центрĕнче районри парти активĕн пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху ПСК(б)П Обком пленумĕн решенисене тата ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ партин йертсе пыракан органĕсен суйлавĕсене иртересси çинчен йышăннă постановленине сÿтсе-йаврĕ. Çитес кунсенче ку ыйтупах пĕччен коммунисcен пухăвĕ пулса иртет.

Парти организатăрĕсене отчотсем çырма пулăшма районри парти активĕн членĕсене, райком инструктăрĕсене хушнă.

ЕЛĔК районĕ

ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ партин йертсе пыракан органĕсен суйлавĕсене иртересси çинчен йышăннă постановлени хаçатсенче пичетленсе тухнă хыççăнах Елĕк районĕнчи парти организацисем ку постановленийе парти пухăвĕсенче сÿтсе йавма тытăннă. Парти Тĕп Комитечĕн постановленине халĕ коммунисcем парти шкулĕсемпе кружокĕсенче вĕренеççĕ.

Парти райкомĕ апрелĕн 6-мĕшĕнче парторгсен канашлăвне ирттернĕ. Ку канашлура ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ партин йертсе пыракан органĕсен суйлавĕсене иртересси çинчен йышăннă постановленине сÿтсе-йавнă. Çакăнпа пĕрлех канашлу партин йертсе пыракан органĕсен суйлавĕсене иртермели плана пăхса тухнă. Ку план тăрăх партин пуçламĕш организацисенче отчотпа суйлав пухăвĕсем апрелĕн 10-мĕшĕнче пуçланса апрелĕн 25-мĕшне çитиччен пымала. Пур парти организацисенче те райком отчочĕсем пулаççĕ. Парторгсене отчотсем çырма райком членĕсем, инструктăрсем пулăшаççĕ. Райĕçтăвком çумĕнчи парторг отчот çырма тытăннă та ĕнтĕ.

Майăн 15-мĕшĕнче районри коммунисcен пухăвĕ пулат. Ку пухура райком отчочĕ пулат тата райком пленумĕн членĕсене суйлаççĕ.

АГИТАТĂРСЕМ ВĔРЕНСЕ ТУХРĔÇ

КУСЛАВККА. ПСК(б)П райкомĕ Совет Союзĕн Верховнăй Совечĕн суйлав кампанинче палăрнă актива пуçтарса, вунă кунлăх курсран 84 çын вĕрентсе кăларчĕ.

Вĕсенчен партире тăманнисем—22 çын тата хĕрарăмсем—14 çын вĕренсе тухрĕç.

Курсра парти райкомĕн секретарĕсем тата районри йертсе пыракан работниксем вĕрентрĕç.

Н. Петров.

1938 çулхи çураки умĕн

Вăрлăхсене иккĕмĕш хут тĕрĕслеççĕ

Патăрйел Апрелĕн 5-мĕшĕ (телефон тăрăх). Районра колхозсен вăрлăх пахалăхне тĕрĕслес тĕлĕшпе МТС çумĕнчи вăрлăх лабораторийĕ ĕçлет. Ку вăрлăх лабораторийĕ колхозсен акмали вăрлăхĕсене пĕрремĕш хут тĕрĕслесе тухса, иккĕмĕш хут тĕрĕслеме тытăнчĕ. Районра пурĕ 7822 центнĕр сĕлĕ вăрлăхне пĕрремĕш хут тĕрĕслесе тухнă хыççăн, 4508 центнĕр кондицилĕ мар, 3286 центнĕр чĕрĕ пулнине, 1148 центнĕр суртламан вăрлăх пулнине палăртнă.

Çавнашкалах 4225 центнĕр çурхи тулăна тĕрĕслесе тухнă, 3648 центнĕр кондицилĕ мар, çумкурăк вăррипе хутăшши 2022 центнĕр, вутпуççили 2383 центнĕр, чĕрĕ пирки 1505 центнĕр кондицилĕ маррине палăртса хăварнă. Пăрçа 1250 центнĕртан 1173 центнĕр, йасмăк 1264 центнĕр, кантăр вăрри 210 центнĕр кондицилĕ мар тесе палăртса, тепĕр хут тĕрĕслеме кăтартса хăварнă.

Районра таса та суртлă вăрлăхшăн кĕрешекен колхозсем те чылай. „Çалтăр" колхозăн акмали вăрлăхĕсене тĕрĕслесе тухнă хыççăн, сĕлĕ 343 центнĕр, çурхи тулă 145 центнĕр, „Хĕрлĕ Туçа" колхозăн сĕлĕ 238 центнĕр, пăрçа 20 центнĕр т. ыт. культурăсем те лайăх кондицилине палăртса, акма йурăхлă тесе йышăннă.

Çуракине хатĕрленес, вăрлăхсене суртлас тĕлĕшпе Ленин йачĕпе тăракан колхоз ытла та сÿрĕкĕн ĕçлесе пырат. Ку колхозăн каçал 337 центнĕр сĕлĕ, 331 центнĕр çурхи тулă акмала. Анчах та çак вăрлăхсене хĕлле çапса 1,5 метр хулăмĕш хывса вăрлăх кондицине çухатнă. Пăрçа вăрлăхĕ акма та йурăхлă мар.

„Майак", „Культурă" колхозсем вăрлăхсене суртламан пирки пайанхи кунччен те районри вăрлăх лабораторине тĕрĕслеме леççе паман. Пĕтĕмпе вăрлăх лабораторий тĕрĕслесе тухнă 95 процент сĕлĕ вăрлăхĕсенчен 45,3 процент çеç акма йурăхлă тесе палăртнă.

Районра вăрлăх мĕнле пахалăхпа шăтнине шăтарса пăхас ĕç вырăнтан та хускалман. Çак кĕске срукра вăрлăхсене тĕплĕн тĕрĕслесе тухмала.

Н. Пушкин.

Малти вырăна тухассишĕн

Чучукассинчи Молăтăв йачĕпе тăракан колхоз (Шупашкар р.) иртнĕ çулта агротехникăла ĕçсене пурне те пурнăçласа пынипе вăйлă тырпул туса илсе, районра иккĕмĕш вырăна тухрĕ. Кăçал колхоз „Шордан" колхозĕпе ăмăртса ĕçлет. Кашни гектартан 21 центнĕр тĕштырă туса илес задачă лартнă. Гектартан 21 центнĕр тĕштырă туса илме колхозăн кирлĕ условисем пурте пур. Колхоз акана тухма хатĕрленсе çитнĕ. Пĕтĕм вăрлăхсене трийĕрпа тасатнă. Вăрлăх участкисене акса хăварма, пĕрчĕлĕ тырăсене алăпа суйланă. Йалхуçалăх машинисене, лаша кÿлмели таврашсене йусаса çитернĕ. Лашасене ĕçрен хăтарса лайăх апат çине тăратнă. Çĕре çемçетмели йапаласене çителĕклĕ таранах хатĕрленĕ. Кăçал 18 гектар çине акма 32,4 центнĕр кĕрхи тулăна „АБ" препаратпа емеллесе, 16,5 гектар çине 29,65 центнĕр урпа вăрлăхне формалинпа çуса акаççĕ. Вăрлăх участкисем çине акса хăвармали тулăпа урпа вăрлăхĕсене ăшă шыва йарса чÿкесе акаççĕ. Викăпа пăрçасăр пуçне пĕтĕмпех йаровизацилесе акма палăртнă. Йаровизаци тăвакание йатарласах курсра вĕрентсе кăларнă. Çурхи тулă калчисене кайăк-кĕшĕк тислĕкĕпе сульфат аммони хутăштарса апат пама хатĕрленнĕ. Кĕрхи тырăсене пĕтĕмпех сÿрелесе хăвараççĕ. Çурхи тырăсене çумкурăкĕсенчен икĕ хут, кĕрхи тырăсене пĕр хут çумлаççĕ. Кĕрхи тырă калчисене сÿрелеççĕ.

Çапла вара агротехника хушнă майсемпе ĕçлесе пырса, кашни гектартан ыраш 21 центнĕр, кĕрхи тулă 27 центнĕр, сĕлĕ 22 центнĕр, викă 22 центнĕр, урпа 25 центнĕр туса илессишĕн тăрăшаççĕ. Производствă планне туса çирĕплетнĕ. Кашни бригадăрах плугпа ĕçлекенсене, акакансене, сÿрелекенсене тата ыттисене те палăртса тухнă. Кашни колхозник çураки вăхатĕнче мĕн ĕçлемелине пĕлсе тăрат. Кашни ĕç вальли уйрăм звеносем организациленĕ. Колхоз çуракине 5 кунта пĕтерме шутлат, иртнĕ çулта та 5 кунта пĕтернĕ.

Çапла майпа ĕçлесе Молăтăв йачĕпе тăракан колхоз кăçал вăйлă тырпул туса илсе, районра пĕрремĕш вырăна тухассишĕн кĕрешет.

Е. Васильйĕв.

Çĕрĕç пайĕ оперативлă йертсе пымаст

Çуракине тухиччен вăхăт сахал йулчĕ. „Пучах" колхозра (Çĕрпÿ р.) çуракине хатĕрленсе çитмен ха.

Колхозăн суртлă вăрлăхсем çитмеççĕ. Ку ĕнтĕ Çĕрпÿ райçĕрĕç пайĕ темиçе тĕрлĕ çураки планĕ тунинчен килчĕ. Акă райçĕрĕç пайĕ йанвар уйăхĕнче пĕр план пачĕ, халĕ тата мартăн 31-мĕшĕнче улăштарса тунă çураки планне пачĕç. Ку план тăрăх „Пучах" колхозăн 8 гектар çинче акма тулă, 5,75 гектар çинче акма урпа вăрлăхĕ çитмест.

Пахалăх комиççийĕпе агрономсем вăрлăхсен пахалăхне тĕрĕсленĕ хыççăн, вăрлăхсене йачĕшĕн анчах суртлани палăрчĕ. Алăпа суртланă пăрçа тата кантăр вăрлăхĕсем акма йурăхсăр. Тасамар вăрлăхсене тепĕр хут суртлама халĕ те тытăнман-ха. Вăрлăхсене ку тарана çитсе те районри вăрлăх лабораторине илсе кайса анализ тутарман, çакна пула хăйсен вăрлăхĕ акма йурăхлипе йурăхлă маррине те пĕлмеççĕ.

П. Павлăв.

„Тăшман парăнмаст пулсан,—ăна пĕтереççĕ"

М. Горькин публицистика статйисен сборникĕ *)

Алексей Максимăвич Горький мĕлйунсен ăстăнне ĕççыннисен вĕçĕмсĕр йуратнă тусĕ тата коммунисăмшăн кĕрешессипе хавхалантаракан пулса кĕчĕ.

Ленинпа Сталинăн тусĕ, ĕмĕр вилми совет халăхĕн тÿрĕ тата ырă ывăлĕ Горький хăйĕн пĕтĕм пурнăçне революцине, рабочисемпе хресченсен ĕçне панă. Художникăн тата мыслителĕн пысăк талантне пĕтĕмпех йуратнă халăха панă. Унăн вилĕмсĕр сăнарĕ пролетари революцин йăлтăр таса паттăрăн, пирĕн епохăри чаплă художникăн сăнарĕ пулса ĕмĕрсене кĕрсе йулĕ.

Вăл хăйĕн халăхне, хăйĕн тăван çĕршывне, Ленин—Сталин партине йуратнă, çавăнпа ăна тăшмансем урса кайнă хайарлăхпа курайман, çавăнпа ĕнтĕ тăшмансем Сталин епохинчи çав чаплă çынна вĕлернĕ. Халăх тăшманĕсем троцкисла-бухаринла бандитсем чаплă Горькине вĕлернĕ. Унăн вилĕмĕ Ленин вилнĕ хыççăн,—„пирĕн çĕршывшăн тата пĕтĕм етемлĕхшĕн чи йăвăр çухату пулса тăрат" (**Молăтăв**).

Максим Горькин аслă та чаплă сăнарĕ вăл çырнă пахаран та паха кĕнекесен страницисенчен пысăккăн тухса тăрат. Горькин революцилĕ публицистикă кĕнекисенче епохă çулăмлăн сывлани сисĕнсе тăрат. Горький, йулашки вунă çул хушшинче çырнă статйисенче, ĕççыннисен пурнăçĕшĕн тăрăшнисĕр пуçне, хăйĕн пурнăçĕнче урăх тĕллев тытман аслă çынăн вăйхалне кăтартса панă.

Горьки çине сутăнчăк сынвĕлеренсем ал çĕкленĕ кунсенче, çав кунсенче ĕнтĕ пĕтĕм тĕнчипе Горький тăшмансене, етемлĕхĕн йурăхсăра тухнă патисене ылханса калани, чан сасси пек, йантрарĕ. „Социалисăмлă Совет республикĕн чăн-чăн çулăмлă революционерĕ хăйĕн тăшманне ăнланулăн, активлăн тата паттăр хăйулăхпа ылханмасăр тăма пултараймаст. Пирĕн тăшмана ылханас права çителĕклĕ, сăлтавлă тата тĕрĕслĕхлĕ.

...Пирĕн, епĕр хамăр телейшĕн ĕçлеме начар мар вĕренсе çитнине, тата ăна епĕр хамăр пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисене ĕмăртан хăтарассишĕн, вĕсен ирĕклĕхĕпе телейлĕхĕшĕн тата та лайăхрах ĕçлеме вĕренсен çеç пурнăçра çирĕплетме пултарнине сыварнă чухне те асра тытма кирлĕ".

Горький халăхпа пĕр пурнăçпа пурăннă. Вăл хамăран партийĕн, халăхсен генилĕ çулпуçĕсемшĕн—Ленинпа Сталиншăн хĕпĕртенĕ, вăл сыншăн—социалисăм строителĕшĕн хĕпĕртенĕ.

„Маçăн савăнăç тата хаваслăх,—тесе çырнă Горький, —çĕнĕ вырăс сынни, çĕнĕ государствăна тăвакан çын.

Çав пĕчĕк, анчах аслă, çĕршывăн пур кĕтессисем, хапрăксем, йалсем тăрăх саланнă, çеçен хирсенче, Çĕпĕрти тайгара, Кавказ тăвĕсем хушшинче, Çурçĕр тундринче пурăнакан çынсене тата хăшпĕр чухне хăйне лысăк йăварлăхпа ăнланакан çынсем хушшинче тăр пĕччен ĕçлекен çынна, нумай туман пек пулса мухтанмасăр, анчах та историлĕ вырăн йышăнакан ĕçе тăвакан хамăр государствăн работникне, — çавна епĕ хамăн йатрап хĕрÿлĕ саламлатăп.

Йулташ! Пĕл те ĕнен,—есĕ çĕр çинче чи кирлĕ çын".

Хăйĕн кăмăлне палăртнă чух пит виçелĕ çын, совет халăхĕн творчĕствăлă иксĕлми вăйĕпе савăннă, вăл çĕрĕн улттăмĕш пайне урăхлатакан, хамăрăн çутçанталăка урăхлатакан ăслăлăхпа ĕçлев çыннисене савса тĕлĕнмеле чаплă йурланă. Вăл большевиксен иксĕлми вăйне савса йурланă.

„Çапла дифирамб! Хамăн пĕтĕм пурнăçра епĕ ĕçлеме йуратакан тата ĕçлеме пултаракан çынсем, хăйсен умне етемĕн пĕтĕм вăйне, творчĕствă вальли, хамăр çĕре илемлетмешкĕн, унăн çинче çынсене тивĕçлĕ формăлă пурнăç организацилемешкĕн ирĕке кăларас тĕллев лартнă çынсем çеç чăн-чăн герой пулнине куртăм".

Горькин кашни сăмахĕ тĕлленĕ вырăна лекнĕ, вăл сăмахсене халăхсен йуратăвĕ йышăннă тата çав вăхăтрах клас тăшманĕсем тискер кайăксен хайарлăхĕпе çиленнĕ. Хăй калашле, вăл рабочисемпе хресченсен влаçне нихăçан та суйман, унăн ĕçĕсемпе, унăн çынсене ĕçлемешкĕн тата творчĕствăна çĕклемешкĕн хавхалантаракан пултарулăхĕпе, пĕлÿлĕхĕпе савăннă. Вăл пĕтĕм прогреççивлă етемлĕхĕн пулма тивĕçлĕ кăмăлĕ, тĕнчери интеллигенцин глашатайĕ пулнă.

Буржуазипе унăн хÿрисем аслă писателе йунăхнă, мĕншĕн тесен, вăл рабочисемпе тата хресченсемпе пĕрле пулнă. Аслă Горький каланă: „Çавнашкал шавласси ĕнер çеç пуçланман, çавăнпа епĕ çавнашкал шавлани епĕ виличчен пĕтес çукки çине шанатăп, мĕншĕн тесен, унччен епĕ мана сирĕн хĕрÿлĕ вăй-хăват лартнă позицирен парăнмастăп". Совет рабочисенпе хресченсен хĕрÿлĕ вăйĕ Максим Горькине коммунисăм çĕнтерессине ĕнентернĕ. Ĕçхалăхĕн генилĕ тата талантлă ывăлĕ Горький хăйĕн пурнăçĕн йулашки минутне çитиччĕнех революцилĕ çар ĕретĕнче тăнă.

„Ленин Российă историнче ĕмĕрлĕхех йулĕ"—тесе çырнă Горький. Ленин тата Сталин, большевиксем ССР Союз историне ĕмĕр асран кайми çутă страницăсем çырса хучĕç. Хăйсен умне тĕнчери пĕтĕм ăслă çынсен ĕмĕчĕсене пурне те пурнăça кĕртес задачă лартнă Ленинпа Сталин партийĕ çинчен, большевиксем çинчен Максим Горький йаланах çав тери ырласа йуратса каланă. Большевиксене истори суратнă, вĕсене рабочисемпе хресченсен организатăрĕсем тата çулпуçĕсем пулма истори вĕрентсе малти вырăна кăларнă.

Совет халăхĕсен çулĕ тĕрĕс, мĕншĕн тесен çĕршыва йертсе пыракан большевиксен партине Ленинпа Сталин пăхса ÿстернĕ. „Иоçиф Сталинăн, парти рулевойĕн хурăç пек çирĕп вăйхалĕ,—çырнă Горький, — тĕрĕс çулран пăрăнакансене питех те лайăххăн аркатса пырат тата парти карапĕн командине тĕрлĕрен „пуç çавăрăнусенчен" питех те хăвăрттăн сиплет".

Горькин чаплă кĕнекине вуласан ирĕксĕрех аслă гуманисăн, коммунисăм çулĕ çинче тăракан тăшмансене нимĕн чухлĕ те каçару паман çынăн сăнарне куратăн. Революцилĕ тĕллевшĕн тăрăшакан çын, вăйлă чунхаллă çын Алексей Максимăвич Горький пире халăхăн телейлĕхĕшĕн кĕрешнĕ чух хăватлă пулма вĕрентет.

Горький кĕнеки вăл—ăслăлăх çăлкуçĕ, унăн çивĕч, хайар, сутă шухăшĕсен пуйанлăхĕ...-Горькин тĕп шухăшĕнче — çын, социалисăмăн активлă строителĕ, халăх тăшманĕсемпе кĕрешсе пиçнĕскер.

„...„Çын" çеç—питех те сахал-ха",— вĕрентнĕ Горький.

„Истори рассăлă, нацилĕ, класлă айванлăхсенчен ирĕклĕ çĕнĕ çын килессе кĕтет".

Пулма пултарат-и çавăн пек çын? Рабочисен класĕ ун пек çынна туса пырат те ĕнтĕ. Хăвăрăн пĕтĕм вăйна, хăвăрăн пурнăçăн пур кунĕсене те çавнашкал çын пуласшăн кĕрешнĕ çĕре хурăр, вара есĕр хăвăрттăнах çавăн пек çын тума пултаратăр".

Пирĕн вăхăтри чăн-чăн герой вăл,—çĕнĕ çын. Горький çавăн пек çынсене хамăрăн тăван çĕршыври ним кăшкăравсăр, харкашусăр социалисăмла пурнăç тăвакансене курнă. „Пирĕн кунсенче геройсем,—çырнă Горький, — „массăран" тухнă çынсем, культурăн чернорабочийĕ, рйадовой партийĕц, рабкор, селькор, войенкер, вулав çурт пуçлăхĕ, выдвиженĕц, йалти учитĕл, çамрăк врач тата агроном, хресчен-„опытник" тата активист, рабочи-изобратателĕ, пĕтĕмĕшпе илсен—массăсен çынни. Массă çине, массăсем хушшинче çавнашкал геройсем ÿстересси çине тимлĕн çавăрăнса пăхмала".

Малала хăвăрттăн каймала тумашкăн тăшмансен, мешченсен, „механически çынсен", сутăнчăксен, икĕпитленекенсен ирсĕр ĕçĕсене курни кирлĕ. Горький халăха сисĕмлĕ пулма чĕнет, вăл мешченсене, ирсĕрсене, „механически çынсене" хирĕç татăклăн кĕрешÿ пуçарат. Рабочи класа улталакансем унăн ăшчикĕнче ылхану çуратнă. „Епĕ çапла шутлатăп,—тенĕ Горький,—тиф пыйтине те ăна сутăнчăксемпе танлаштарни кÿрентернĕ пулĕччĕ".

Горький 1930 çулта революцилĕ сисĕмлĕхпе тулнă строкасем çырнă.

„Епĕр тĕнчери пĕтĕм буржуазипе татти-сыпписĕр пыракан вăрçă условисенче пурăнатпăр. Ку ĕнтĕ рабочи класа хăйне сыхланма, хăйне вальли хăй мĕн тунине сыхлама лайăххăн хатĕрленме тата пĕтĕм тĕнчери пролетарисене вĕрентме хушат..."

Тепĕр çĕрте Горький çапла çырнă: „Иртни çине çавăрăнса пăхма кирлĕ, истори—начар учитĕл мар. Анчах Совет Союзĕнчи рабочисемпе хресченсем пиатилеткăн виççĕмĕш çулĕнче, социалисăм строителствин тăвăллă кунĕсенче хăйсен пуласлăхĕ çине питех те тимлĕн пăхмала. Тăшман—ухмах мар, вăл Совет Союзĕн халăхĕ вăйлăн çĕнелсе ÿсни хăйне мĕнле хĕснине сисет, вăл халĕ Совет Союзĕнчи рабочисемпе хресченсен промышлĕннăçпа культурă ĕçĕнчи ÿсĕмĕсене хăйĕнчен пытармаст... Умĕнче вилĕм хăрушлăхĕ тăни йертсе пынă чухне вăл хăйĕн лучăркаса пĕтнĕ пурнăçĕн йулашкисемшĕн хайаррăн кĕрешет".

Акă мĕншĕн Максим Горький рабочисемпе хресченсенчен революцилĕ сисĕмлĕхе хăпартма, тăшмана пур хĕçпăшалсемпе те хирĕç тăма хатĕр пулма хушат.

„Тăшман çине тимлĕн çавăрăнса пăхмала,—вăл çавна кăтартрĕ. Ăна сисме пĕлмеле, вăл шарламаст тата килĕшÿлĕ кулат пулсан та унăн йуррисемпе каласу сăмахĕсем хыçĕнчи суйалăхне палăртма пĕлмеле. Тăшмана унăн професçилĕ гуманиссен кăшкăрнине тата сывлăшне пăхмасăр пĕтермеле".

Горький каланă: „Тăшман парăнмаст пулсан,—ăна пĕтереççĕ".

Горький фашисăма тата ун пек çынсене ылханат. Вăл фашиссене икĕ уралă тискер кайăксем, çĕрщер тата пиншер сывлăхлă, ĕçлеме пултаракан, талантлă çынсене вĕлерекенсем тесе каланă. „Фашисăм—культурăна хирĕçлени,—тенĕ Горький,—вăрçăшăн калаçни, вăйсăрланса çитнисем, вăйлă пулассишĕн кăшкăрни".

Горький фашисăма хирĕç каланисем вĕсем,—пурте варвăрсене хирĕç, етемлĕхĕн культурине путаракансене хирĕç, ĕççыннисен хайар тăшманĕсене хирĕç кĕрешмешкĕн пĕрлешме чĕнни пулат.

Анри Барбюспа уйăрăлнă чухне Горький каланă: „Пролетариатăн пĕтĕм тĕнчери ĕçĕшĕн кĕрешекен паттăр пурнăçран уйăрăлнă—ĕçлеме чарăннă чухне, вăл вилнĕ тесе калас та килмест. Апла калани тĕрĕс пулманнине сисетĕн. Анри Барбюс пек çынсемшĕн вилĕм кунĕ вĕсен ĕçĕн итогĕн пуçламĕшĕ, унăн революцилĕ вырăнлăхне сарса вăйлатассин пуçламĕшĕ пулса тăрат".

Çак сăмахсем Алексей Максимăвич Горький çинчен калама тата та вырнаçулăрах. Пирĕн епохăри чаплă çынăн вилĕмсĕр сăнарĕ, Максим Горькин аслă сăнарĕ пирĕн активлăха, пирĕн вăйхала коммунисăмшăн тата та лайăхрах, тата та хăватлăрах кĕрешнĕ çĕре мобилизацилет.

Б. ГАЛИН.

*) М. Горький. „Если враг не сдается, — его уничтожают". Государственное издательство „Художественная литература". Москва 1938. Стр. 344. Цена в переплете 5 р. 50 к.

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн X-мĕш Çессийĕ

Самарин йулташ сăмахĕ *)

(Вырăнти промышлĕннăç халăх комиссарĕ)

Çĕççире пăхса тухса çирĕплетме тăратнă план пысăк, вăл—пирĕн хуçалăхри малашнехи ÿсĕмсен планĕ. Пирĕн план социалисăмла хуçалăхăн çĕнтерÿлĕ ÿсĕмĕсем çинчен капитал хывнин цифрĕсен чĕлхипе каласа парать. Çутĕç, Сывлăха сыхлав т. ыт. ĕçсем çине расхутлакан укçа-тенкĕсĕм тăрăх партипе правительствă Совет Сойузĕнчи халăхсемшĕн, çав шутрах чăваш халăхĕшĕн те, мĕн пек тăрăшнине, мĕн пек пулăшнине куратпăр. Ку план суйлава хатĕрленес ĕçре пысăк агитацилĕ докумĕнт пулса тăрать, вăл пирĕн халăх хуçалăхĕн çывăх вăхăтра пулмали ĕçĕсем çинчен ĕпентерÿлĕн каласа парать. Иртнĕ çулсенчи плансемпе танлаштарсан, 1938 çулхи планăн хăшпĕр уйрăмлăхĕсем çинче чарăнса тăмала. Пĕррĕмĕш уйрăмлăх—Сойуз промышлĕннăçне вăйлăн ÿсме май пани. Чăваш республикĕ—шултăра индустри центрĕ пулса тăрать.

Иккĕмĕш уйрăмлăх — пур пысăк ĕçсене те: промышлĕннăçра, йалхуçалăхĕнче, сывлăха сыхлас ĕçре, строительствăра т. ыт. çĕрте те сăтăрçăсен йулашкисене пĕтерме майсем тупни.

Виççĕмĕш уйрăмлăх—план тăрăх уйăракан укçана ĕç интересĕне çыхăнтарса расхутламала тупни. Иртнĕ çулта, Чăвашторга тата ытти организацисене те убыткăсене витме укçа панă, кăçалхи планра епĕр ăна курмастпăр. Ку ĕнтĕ государствă укçине вырăнлă усă курма вĕрентет.

Пирĕн убыткăлă предприйатисем те пур, вăл пачах пулмала мар.

Планра ĕçхалăхĕн пурнăçне лайăхлатас тĕлĕшпе пысăк улшăну тума палăртнă. Чей ĕçмели вырăнсем çинчен, квас çинчен калаçма та кирлĕ мар пек, анчах кунта та партипе правительствă çыншăн тăрăшни лайăх палăрать. Тулăх пурнăç çинчен калаçу пырат пулсан, тулăхлăха пур ыйтупа та тума тăрăшмала.

Йулашкинчен тата пирĕн планра хуçалăхăн йулса пыракан пайĕсене вăйлатма палăртни çинчен каламала. Акă йалхуçалăхĕ йенĕпе пахча-çимĕç тăвассине илер. Вĕсем пирĕн республикре питех пулса пыраççĕ. Чăваш республикĕ чечĕкленекен сат-пахчилĕ пулмала. Кунта укçа-тенкĕ те питех нумай кирлĕ мар, кунта совет работникĕсемпе хуçалăх çыннисем халăха çав ĕçе мобилизацилеме пĕлмеле. Ман шутпа, ку плана халăхăн тата партипе правительствăн ыйтăвĕсемпе килĕштерсе тунă, ăна Çĕççи çирĕплетет пулĕ, тесе шутлатăп епĕ.

Ку плана йышăнсан, ăна пурнăçа кĕртес ыйту тухса тăрать. Чи малтан сăтăрлă ĕçсен йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе ыйтăва татăклăн лартмала. Йулашки вăхăтра нумай çĕрте, пуринчен ытла, вырăнти промышлĕннăç çистеминче сăтăрла ĕçсен йулашкине пĕтерес тĕлĕшпе начар ĕçлени палăра пуçларĕ. Вырăнти промышлĕннăç пысăках мар, унта тăшмансем нимех те тума пултарман пек, анчах пурнăç пачах урăхла кăтартса пачĕ. Тăшмансем Сойуз предприйатисенче те, вырăнтисенче те хăйсен ирсĕр ĕçĕсене тунă.

Акă Шупашкарти кирпĕч савăтне илер. Унта тăшман сăтăрлас тĕлĕшпе тĕрĕс мар монтаж тунă. Çавăн пиркийех план тулман. Вăрмарта та сăтăрла ĕç пулнă. Унта хапрăк çурчĕ кĕç-вĕç стройран тухас пек тăрать. Йусапă чухне пăс вăйĕн хуçалăхĕ çинчен кăçалхи плана кĕртмо те маннă. Пăс вăйĕпе усă курасси йĕркесĕр пулса пыни ĕçлеме чăрмантарать.

Сăтăрла ĕç плана тултарма чăрмантарчĕ, плана 87,3 проц. çеç тултарнă. Сăтăрла ĕçсен йулашкисемпе кĕрешме пĕтĕм коллектива мобилизацилесси — тĕп задач пулмала.

Вырăнти промышлĕннăç тăрăх пирĕн пĕррĕмĕш кварталта çулталăкри лимитран 30 процентне усă курмала пулнă, епĕр пĕтĕмпе 10 процентне çеç усă куртăмăр. Урăхла каласан, 4 мĕлйун тенкĕрен тăракан бÿджетăн 500 пин тенкипе çеç усă курнă. Çапла вара ытти кварталсенче бÿджетăн 90 процентне пурнăça кĕртмеле пулать. Мĕншĕн çавнашкал пулнă? Пĕр йенчен вырăнти промышлĕннăç укçа-тенкĕпе усă курма хатĕр пулман, тепĕр йенчен укçа-тенкĕ пулман. Малашне те çавăн пекех пулсан, плана тултарсси те хăрушлăх умĕнче тăрса йулма пултарать. Çавăнпа укçа-тенкĕ пухас ĕç финанс оргăнĕсен ĕçĕ çеç мар, пĕтĕм ĕççыннисен ĕçĕ пулса тăрать. Пирĕн промышлĕннăç работникĕсен те вăл ĕçе хутшăнмала. Пирĕн укçа-тенкĕне пĕрекетлĕ тыткаламала тума хамăр патри пур ресурсăсемпе те усă курмала. Капитал хывас плана тултарассине татса паракан условисенчен тепри вăл — строительствă йенĕпе материалсем çителĕклĕ тăратасси пулать. Епĕр кăçал та 1937 çулхи пекех ĕçлесен, 1938 çулхи строительствă планне тултарасси хăрушлăхра пулать. 1937 çулта пирĕн кирпĕч савăчĕсем хăйсен планне 84 процент, районри савăтсем 94 процент, государствă савăчĕсем 41 процент çеç тултарнă.

Халĕхи вăхăтра епĕр хамăрăн государствă савăчĕсем плана палăртнă таран кирпĕч памала тăвассишĕн çирĕп майсем йышăнтăмăр. Анчах та тимлĕн кĕрешни, ĕçе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ хутшăнни кирлĕ. Епĕр районсенчи кирпĕч савăчĕсене сезон пуçланнă тĕле хута кĕртме шутлатпăр. Чылай çĕрте пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Канашри савăтра çунтармали вутă çук. Тракри кирпĕч савăтĕнче оборудованисене вырнаçтарса лартмала. Траксем çав ĕçе тума пултарсан, епĕр вĕсене пулăшатпăр. Вара апрелĕн 15—20-мĕшĕсенче савăта хута кĕртме пулать.

Çĕмĕрлесен пĕр ыйтăва халех татса хумала. Вĕсем комбинатран електроенерги илме пултараççĕ-и? Електроенерги комбинатран илме май пулсан, ыйтăва татса пама çăмăлтарах пулать. Апла тума май килмесен, двигатĕл лартасси çинчен ыйту татмала.

Строительствă материалĕсем хатĕрлес тĕлĕшпе пирĕн колхозсем йенĕпе черепицă тăвассине вăйлатассишĕн тимлĕн кĕрешмеле. Строительствă материалĕсем нумай кирлĕ. 1938 çул колхозсем, промкооперация тата райĕçтăвкомсем йенĕпе черепицă кăларассипе вăйлатмали çулталăк пулса тăмала.

*) Сăмахсем пурте—кĕскетнĕ стенограммăсем.

Каплин йулташ сăмахĕ

Халăх хуçалăхĕн 1938 çулхи планĕ, иртнĕ çулхисемпе танлаштарсан, чылай пысăк. Епĕр промышлĕннăç строительствине,—уйрăмах куљтурă строительствине укçа-тенкĕ нумай хуратпăр. Халăх хуçалăхĕн планĕнче коммуналлă хуçалăх строительствине 8 мĕлйун тенкĕ ытларах укçа пама пăхнă. Çак пысăк укçа чи малтан електростанци, водопровод, район центрĕсене лайăхлатма, пурăнмали çуртсем, çулсем, кĕперсем тăвас ĕçе кайать. План тăрăх паракан укçа-тенкĕпе пĕлсе усă курсан, епĕр 1938 çулта питех те пысăк ĕçсем тума пултаратпăр.

Пирĕн сăтăрçăсем туса хăварнă ĕçсен йулашкине хăвăрт пĕтермеле. Сăтăрçăсем коммуналлă хуçалăхра пире пысăк сийен кÿнĕ. Акă, илĕр-ха Шупашкарти водопроводах. Водопровода хулара 20 пин çын пурăнассине шута илсе пройектленĕ. Кунта халăх ÿсессине шута илмеле пулнă. Шупашкарти електростанци 1929 çулта 50 киловаттлă пулнă, халĕ пире 10 пин киловаттлă станци кирлĕ.

Пурăнмали çуртсем тăвас ĕçре те пысăк çитменлĕхсем пур. Ку ĕç çине те тимлĕн пăхни çук. Сăмахран, 26 хватерлĕ çуртра кăмакасем тунă, анчах кăмакисем пĕри те йурăхлă мар.

Коммуналлă хуçалăх строительстви пуринчен ытла хуласенче анлăн сарăлса пырать. Анчах та пирĕн хула совечĕсем коммуналлă строительствă ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлемеççĕ. Хула совечĕсен, чи малтан унăн коммуналлă пайĕсен хăйсен ĕçне тĕплĕн тума вĕренмеле.

Строительствă материалĕсем тăратакан организацисен ĕçĕ пысăк вырăнта пулмала. Халĕ пирĕн росснабсбыт текен организаци питĕ начар ĕçлет. Вăл строительствăра кирлĕ материалсене вăхăтра тата çителĕклĕ таран кÿрсе килмест. Çакна пула час-часах ĕçре пысăк чăрмав пулать.

Вырăнти материалсем çинчен ытларах шутламала. Вырăнти строительствă материалĕсене хатĕрлес тĕлĕшпе пирĕн республикăра никам та ответлă мар. Малашне вырăнти строительствă материалĕсене хатĕрлессине вăйлатмала. Куншăн ответлă организаци тата ответлă çын пулмала.

Малала Шупашкарта водопровод тăвасси çинчен. Кунта пирĕн питĕ тăрăшса ĕçлемеле. Кăна пули-пулми материалпа тума çук. Пире цемĕнт, арматур кирлĕ. Вĕсене тупма йăвăртарах. Çавăнпа та цемĕнт, арматур, трубасем илсе килес ĕçе халех тытăнмала, вĕсем çителĕклĕ пулмала.

Иварбейĕв йулташ сăмахĕ

(Елĕк райĕçтăвкомĕн председателĕ)

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Чăваш республикĕнче промышленнăçа ÿстерес тĕлĕшпе палăртса хунисем çав тери тĕрĕс,—Çĕççи ăна ырласа çирĕплетĕ.

Кăçал строительствă ĕçĕ нумай пулать. Уйрăмăнах Шупашкарта ĕç нумай пулмала. Районсен çав стройкăсене çителĕклĕ ĕç вăйĕ тăратмала, çавна тумасан стройкăсене срукра туса пĕтерейĕмĕпĕр. Çавăнпа пирĕн Çĕççинчен таврăнсанах колхоз тата йалсовет председателĕсемпе çураки вăхăтĕнче ĕçе мĕнле йĕркелемели çинчен, çулахипе кĕркуннехи вăхăтсенче мĕнле ĕçлемели çинчен каласса татăлса, промышлĕннăç строительствине рабочисем, платниксем, каменщиксем т. ыт. те ытларах уйăрса памала.

Епĕ планировани ĕçĕнчи çитменлĕхсене кăтартса парасшăн. Пĕррĕмĕш ыйту,—районри халăх хуçалăхĕн планне тунă чухне епĕр мĕнле пулăшу илетпĕр-ха? Пирĕн районра план комиççийĕ пур, райплан председателĕ те, економи ĕ те пур. Анчах вĕсен ĕçĕ куранмасть. Государствăн План Комиççийĕ районсенчи план комиççисене халăх хуçалăхне мĕнле планласси пирки ку таранччен те тĕрĕс те йĕркелĕ кăтартусем паман.

Пирĕн Елĕк районĕнче промышлĕннăç пачах та çук. Епĕр кирпĕч савăчĕ тума план тунăччĕ, пире ăна тума 200 пин тенкĕ укçа паратпăр, тенĕччĕ, анчах кайарахпа, 200 пин тенкĕ мар, иксĕр пус та пама палăртман, терĕç. Çавăн пекех пахча-çимĕç ĕçлесе хатĕрлекен савăт лартма план турĕç, кăна ырларĕç, райплан тĕрĕс тăвать, терĕç. Анчах, халĕ ĕнтĕ сире вађљи нимĕн те палăртман, теççĕ.

Куљтурă строительстви йенĕпе—халљхи вăхăтра колхозсем клубсем, вулав çурчĕсем тăваççĕ. Анчах ку тĕлĕшпе Çутĕç Халăх Комиссариачĕ нимĕнле пулăшу та, нимĕнле кăтарту та памасть.

Çĕнĕ строительствăсене ăста тумалине тĕплĕн палăртса çитерейĕмен пек туйăнать. Акă, республикĕре 15 шкул çĕнĕрен тума тата туса пĕтерейĕмен 16 шкула туса пĕтерме палăртнă. Анчах Елĕк районне куљтурă строительстви йенĕпе нимĕн те паман. Çав хушарах пирĕн Мăн Вылă йалсовечĕпе колхозсем шкул тума йышăнса, 670 кубла метр йăвăç хатĕрлесе 470 кубла метр строительствă пулмали вырăна турттарса пычĕç, хăма çуракан савăта 80 кубла метр леçрĕç. Хăшпĕр районсен шкул тумала пулин те вăрманне те илменха. Çак вăл ĕçе лайăх йĕркелемен-нинчен, колхозниксен ыйтăвне шута илменнинчен килет.

Харитонăвă йулташ сăмахĕ

(Патăрйел райĕçтăвком председателĕ, ССР Сойузĕн Верховнăй Совечĕн депутачĕ)

Йулташсем, пирĕн умра 1938 çулта пит те пысăк задачă тăрать. Пирĕн 1938 çулхи халăх хуçалăхĕн планне бољшевикла пурнăçа кĕртмеле.

Ман шутпа планлас ĕç пит те пысăк вырăнта тăрать. Кунта Каштанова йулташ вир акас ĕçе планласси çинчен каларĕ. Вир ытти тырăсем хушшинче пысăк вырăнта тăрать. Вир акса тăвасси çинчен Халăх Комиссарĕсен Совечĕ постановлени йышăннă. Патăрйел районĕнче вире халĕ те йуратсах каймаççĕ. Епĕр виршĕн чылайранпа агитацилетпĕр, колхозсене вире йуратса акса тума вĕрентесшĕн епĕр.

Халĕ епĕ вир акмали плана районсем тăрăх пайланине пăхса тухрăм. Теменшĕн 12 района вир акма план паман, çав районсем шутĕнче вир акса тума пултаракан районсем те пур. Çав шутрах пирĕн Патăрйел районне вир акма панă планра тĕрĕсмарлăхсем пур. Тĕслĕхрен, районри пĕтĕм акмали çĕр лаптăкĕнчен 25 проценчĕ йединоличниксен аллинче. Пире панă план тăрăх йединоличниксен 300 гектар вир акмала. Кунта вир акса тăвас ĕçе вĕренсе çитменнине шута илес пулнă. Анчах Çĕрĕç халăх комиссариачĕ планлас ĕçри хăйĕн йăнăшĕсене çийĕнчех тÿрлетме тăрăшмасть.

Халĕ ĕнтĕ строительствă ĕçĕ çинчен. Строительствă ĕçĕнче вăрман пысăк вырăнта тăрать. Анчах епĕр вăрман хатĕрлевĕнче начар ĕçлетпĕр. Кĕркунне вăрманта нимĕн чухлĕ те ĕçлемерĕмĕр. Вăрман ĕçĕпе ĕçлекен организацисенче ĕç йĕркелĕ мар. Епĕ виçĕ район: Йелчĕк, Шăмăршă, Шанкăртам районĕсен ĕçĕсемпе интересленетĕм. Йелчĕк районĕнчи колхозниксем Шăмăршă вăрманпромхозне ĕçлеме пынă. Анчах вĕсене вырăтса тăма вырнаçтармасăр икĕ кун асаплантарнă. Йулашкинчен йур айне пулнă барака йанă. Колхозниксем çĕрĕпе барака йуртан, çÿпçапран тасатнă, кроватсене майлаштарнă.

— Сирĕн вĕретнĕ шыв пур-и? тесен,—пур, тесе ответлеççĕ. Бак патне пыраççĕ, бакĕн тĕпĕ çук. Мĕн тума лартнă? Ĕçе çийелтен тăвакан çын пырать те, пăхсан кунта вĕретнĕ шыв пур, тесе тухса кайать. Кирере те çакăн пекех пулнă. Вăрманта ĕçленĕшĕн ĕçукçи памаççĕ. Пирĕн районти „Труд", „Коммунар" колхоз членĕсем иртнĕ çултанпа ĕçукçи илеймеççĕ. Ку вăл колхозниксенчен мăшкăлани,—урăх нимĕн те мар.

ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн суйлав кампани вăхăтĕнче активиссем нумай ÿсрĕç. Халĕ пирĕн задача çак актива ĕçе лартасси, вĕсен шутне ÿстересси пулать. Çапла тусан епĕр хамăр ĕçри прорывсене пĕтерме пултаратпăр. Пирĕн халăх хуçалăхĕн 1938 çулхи планĕнчен тухса тăракан пысăк задачăсене кашни рабочи, кашни колхозник, кашни ĕççынни патне çитермеле. Халăх ĕçе тытăнсан, республика умне лартнă ĕçсене пурнăça кĕртетпĕрех.

Данилăв йулташ сăмахĕ

Манăн кадрсем çинчен калас килет. Çынсене ĕçе лартаççĕ, анчах кунпа çеç ĕç пĕтмест, вĕсене ĕçре пулăшса пырас пулать. Тĕпĕçтăвком ку тĕлĕшпе мĕнле ĕçлет-ха? Кун çинчен ытти председателсем те аван пĕлеççĕ. Тепĕçтăвком вырăнта ĕçлекенсене йĕртсе пымасть. Тĕпĕçтăвкомра ĕçлекенсем, инструктăрсем йалсоветсене йе районсене пыраççĕ те, нимĕнле пулăшу та памаççĕ. Вĕсем кирек мĕнле ыйтупа пырсан та, ĕçсене тĕрĕслеççĕ те, пулăшу памасăр кайаççĕ. Ытти ĕçсем çине çавăрăнса та пăхмаççĕ. Вĕсен пирĕн ĕçри çитменлĕхсене кăтартса хăварас пулать. Тĕпĕçтăвкомăн пире конкретлă пулăшу памала.

Манăн малала халăх хуçалăхĕн планĕ çинчен пăртак чарăнса тăрас килет. Халăх хуçалăх планне пăхнă чухне Хĕрлĕ Чутай районне чăн та усал йенĕпе йатлаççĕ, анчах плана пăхнă чухне Хĕрлĕ Чутай районĕн центăрĕнче клуб çуккине асăрхамаççĕ. Епĕ çак клуб пирки Андрейева йулташ умне ыйту лартрăм Анчах та вăл клуб çинчен Халăх Комиссарĕсен Совечĕ умĕнче ыйту лартас пулать, терĕ. Малашне плана пăхнă чухне кашни районра мĕн кирли çинчен пĕлмеле.

Хабарăв йулташ сăмахĕ

(Шупашкар райĕçтăвком председателĕ)

Епĕ организацилĕ ĕçри, урăхла каласан, халăх хуçалăх планне тултарас ĕçри çитменлĕхсем çинчен каласшăн.

Спасăв йулташ 1937 çулта лартнă задачăсене пурнăçа кертменнисем çинчен хăшпĕр примерсене илсе кăтартрĕ. Кунта епĕр Халăх Комиссарĕсен Совечĕн март уйăхĕнче тухнă постановленине пелетпĕр, унта пирĕн çитменлĕхсем, йалсоветсенчи дисциплинă çинчен кăтартнă. Анчах çитменлĕхсем пирĕн кăна мар, çÿлти организацисен те пур. Çĕрĕç халăх комиссариачĕ йенĕпе панă заданире мĕн чухлĕ-ши çитменлĕхсем?

Аш-кăкай хатĕрлевĕпе ĕç мĕнле пырать-ха пирĕн? Хăшпĕр йалсоветсем йаланах çулталăк планне тепĕр çулăн пĕррĕмĕш кварталĕнче тултарса пынă. Сăмахран, 1937 çулхи плана кăçалхи çулăн пĕррĕмĕш кварталĕнче çеç тултарнă. Пирĕн хатĕрлев уполномоченнăйĕсем те нойабер, декабер, йанвăр уйăхĕсенче нимех те ĕçлемен Чăнах та халĕ ĕç лайăхланни сисĕнет, малашне епĕр татах та тимлĕрех ĕçлеме пулатпăр.

Вăрман хатĕрлевне илер. Вăрман хатĕрлев, организацисем вăрманта ĕçлеме колхоз председателĕсемпе договăрсем тунисĕр пуçне, урăх нимĕн те туман. Вĕсем штурмовщинă йĕркипе ĕçленĕ пулнă.

Епĕ çÿлти организацисене пире йаланах ĕçре пулăшса тăма, ĕç дисциплинине çирĕплетессинче пулăшма ыйтатăп. Пирĕн халĕ организацилĕх йенчей çирĕпленессишĕн тата район центăрĕнчен пуçласа йалсоветпа колхоз председателне çитийех, дисциплинăна сисĕмлĕхе вăйлатса пымала.

Укçа-тенкĕ пухас ĕçе маннă

ШĂХАСАН. Йамаш йалсовечĕ (председателĕ Данилăв) йулашки вăхăтра патшалăх умĕнчи парăмсене парса татас ĕçре кайа йулса пыма пуçларĕ. Укçа-тенкĕ пухасси пуринчен те йапăх пырать. Сăмахран, Доронин йачĕпе тăракан колхоз „ССР Сойузĕн оборонине тĕреклетмели зайома" 600 тенкĕлĕх çырăннă, укçине апрелĕн 1-мĕшне те 125 тенкĕ çеç пухнă. Зайом уполномоченнăйĕ Малашăв нимĕн те ĕçлемест.

Çавăн пекех Йамаш йалĕнче те зайом укçи пухас тĕлĕшпе нимĕн те ĕçлемеççĕ. Зайом уполномоченнăйĕсем — Владимирăв, Виктăрăв, Михейĕв йулташсем укçа пухас ыйтупа халăх хушшинче ăнлантарулă ĕçсем тумаççĕ. Вĕсем зайом укçине 30—40 тенкĕ пухнипех лăпланса ларнă. Йалсоветри финанс çекци руководителĕ С. Йефимăв:

— Укçана мансăр пуçне те пухĕç ха, тесе ларать.

Ал. Иванов.

Матвейĕв йулташ сăмахĕ

Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председател заместителĕ

Йулташсем! План тăрăх 1938 çулта пирĕн Чăваш республикĕнче пит пысăк ĕçсем тума палăртнă. Епĕ кунта шкул строительстви çинчен каласшăн.

1938 çулхи план тăрăх шкул строительстви ĕçне укçа-тенкĕ нумай хывма палăртнă. Хуласенче, уйрăмах йалсенче шкул строительстви анлăн сарăлмала. Халĕ ĕçлекен шкулсене лайăхлатма, шкул ĕçĕсен пахалăхне хăпартма палăртнă. Шкул ĕçĕ çине, ÿссе пыракан çамрăк ăру çине çакăн пек тимлĕн пăхасси пирĕн шкулсем питĕ пысăк вырăнта тăнинчен тухса тăрать. С. М. Кирăв йулташ 1934 çулта çулла каланă сăмахсенчен пĕринче „шкул ыйтăвĕ—вăл пирĕн малала кайас ыйту пулнинĕ ăнланас пулать" тенĕ. Совет шкулĕн, совет учителĕн обйазăннăçĕ—кашни ачана совет гражданинĕ, хăйĕн аслă çĕршывĕн патриочĕ, идейлă, дисциплинăлă, куљтурăлă, ĕçлеме пултаракан, коммунисăм общчĕствин строителĕ туса вĕрентсе çитĕнтересси пулать. Акă мĕншĕн ĕнтĕ епĕр шкул çине тимлĕн çавăрăнса пăхатпăр.

Епĕ пирĕн шкулсен ĕçĕнчи хăшпĕр çитменлĕхсем çинчен каласшăн. Пирĕн шкулсенче иккĕмĕш çула йулакансен хисепĕ пысăк. 1936—37 вĕренÿ çулĕнче иккĕмĕш çула йулнисем 8486 ача пулнă, йе пĕтĕм вĕренекенсен хисепĕнчен 5 процент пулнă.

Иккĕмĕш çула йулни шкул ĕçĕнчи пысăк çитменлĕх. Мĕншĕн тесен, иккĕмĕш çула йулнисем шкулта вырăн йышăнаççĕ, шкул çулне çитнĕ ачасене кирлĕ таран илме май памаççĕ. Кунсăр пуçне вĕсемшĕн государствăн ытлашши укçа-тенкĕ тухать. Çапла. 1936—1937 вĕренÿ çулĕнче кăна вĕсемшĕн 200 пин тенкĕ ытла укçа тăкакланă. Çав укçапа 280 ача вĕренмели лайăх çĕнĕ шкул тума пулатчĕ. Иккĕмĕш çула йулни, вĕрентÿ йенчен пăхсан, шкулсен ĕçĕнчи брак пулать, иккĕмĕш çула йулнисем вĕренекенсем хушшинче дисциплинăна, йĕркене пăсма пулăшаççĕ. Çавăнпа пирĕн иккĕмĕш çула йуласшне пĕтерессишĕн çине тăрса кĕрешмеле. Вăл шкул пуçлăхĕсем, учителсем начартарах ĕçленĕ пирки пулать, çавна пула ĕнтĕ уйрăм шкулсенче иккĕмĕш çула йулнисен хисепĕ пысăк. Учител лайăх ĕçлет пулсан, вăл хăйĕн ĕçне тивĕçлипе туса пырать пулсан, унăн ĕçĕнче çавăн чухлĕ брак пулмĕччĕ. Çакăнтан вывăд тумала: учителĕн хăйĕн тума пултаракан çын пулмала, урока лайăх хатĕрленмеле, кашни вĕренекенĕн ĕçне сăнамала, тĕрĕслемеле, вĕренекенсене вĕренÿре кайа йулма памала мар. Шкул директăрĕн, шкул пуçлăхĕн задачи—учител урока мĕнле хатĕрленнине, класри ĕçе мĕнле йĕркеленине тĕрĕслемеле, класра кайа йулакансем пулсан—вĕсене палăртмала, вĕсемпе мĕнле ĕçленине тĕрĕслесе тăмала. Районти çутĕç пайĕсен тата Çутĕç Халăх Комиссариачĕн задачи — методикă тĕлĕшпе пулăшу парасси, шкулсене инструкцилесси, хатĕрленсе çитнĕ учителсене палăртасси, ĕçлеме пултарайманнисене вăхăтра ĕçрен кăларасси пулать.

Иккĕмĕш ыйту, вĕренекенсем вĕренме пăрахни çинчен. 1936—37 вĕренÿ çулĕнче пĕтĕм вĕренекенсен хисепĕнчен 3 проценчĕ вĕренме пăрахнă.

Ку вăл пысăк çитменлĕх. Вăл вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсем хушшинче начар ĕçленинчен килет. Халĕ те-ха пирĕн хăшпĕр çынсем хăйсен ачисене вĕрентни пит паха иккенне ăнланмаççĕ, вĕсем хăйсен ачисене вĕренме условисем туса памаççĕ. Йалсовечĕсем те, йалти общчĕствăлă организацисем те ку тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ. Халăх хушшинче ăнлантару ĕçне вăйлатмала, пурне те пуçламĕш шкулсенчен вĕрентсе кăларма пулăшакан саккуна пурнăçа кĕртмеле.

Тата тепĕр ыйту—шкулсене учабниксем тата вĕренÿ хатĕрĕсем парасси çинчен. Çак ĕçе тума государствă кашни çулах укçа-тенкĕ нумай парать. Анчах вĕренÿ хатĕрĕсем—класнăй доскасем, картăсем, глобуссем тата ыттисем çук шкулсем халĕ те пур-ха. Туллимар вăтам тата вăтам шкулсенче хими, физикă кабинечĕсем çук. Çавăнпа учител урока сăмах вĕççĕн, класнăй доска çине çырнипе çеç ăнлантарса парать. Паллах ĕнтĕ, çакăн пек чухне вĕренекен предмета тĕплĕн ăнланса илме, тĕрĕс тата тарăн пĕлÿ илме пултараймасть. Пирĕн çак ĕçе тума паракан укçа-тенкĕпе пĕтĕмпех тата тĕрĕс усă курмала. Иртнĕ çулта вĕренÿ хатĕрĕсем илме панă укçапа райĕçтăвкомсем 50—60 процент çеç усă курнă. Çутĕç Халăх Комиссариачĕ те çак укçана тивĕçлĕ ĕçе йарса усă курман. Çаксем ĕнтĕ вĕренÿ пахалăхне хăпартас ĕçе чăрмантарнă.

Учебниксем çинчен каласан, чылай предметсем тăрăх çирĕп учебниксем çук, учебниксем пур предметсем тăрăх та виçĕ вĕренекене пĕр учебник çеç тивет, хăшпĕр предметсем тăрăх учебник те, программă та çук. Çак вăл вĕренÿ пахалăхне ÿстерме чăрмантарать. Ку суту-илÿ организацийĕсем начар ĕçленинчен те килет, вĕсем учебниксем кÿрсе килмеççĕ. Çутĕç Халăх Комиссариачĕ шкулсене учебниксем тăратас тĕлĕшпе ĕçлемест. Çавăнпа та пичетлесе кăларнă учебниксем те шкулсенче çук. Вĕренÿ пахалăхне лайăхлатма, çак çитменлĕхе пĕтермеле.

Шкулсенче вырăс чĕлхине вĕрентесси—пит паха ĕç. Вырăс чĕлхи, интернационаллă чĕлхе, вăл пирĕн совет халăхĕн чĕлхи, епĕр ун урлă пĕтĕм етемлĕхĕн куљтури çумне хутшăнатпăр. Аслă шкулсенче вырăс чĕлхипе вĕрентеççĕ. Çавăнпа пирĕн вырăс чĕлхине лайăх пĕлмеле. Ку участкăра сăтăрçăсем туса хăварнă сийене пĕтермеле. Сăтăрçăсем—буржуалă националиссем шкулсенче вырăс чĕлхине вĕрентме кирлĕ мар, тенĕ. Буржуалă националиссем чăваш чĕлхине мухтанă пек пулса, ку тĕлĕшпе те пысăк сийен кÿнĕ. Шкулсенче вырăс чĕлхине вĕрентес ĕçе питĕ начар йĕркеленĕ. Епĕ Покровский шкулĕнче 4-мĕш класра вĕренекен ученицă тетрадне илсе пăхрăм. Вăл пĕр диктантра 60 йăнăш тунă. Акă мĕнле çырать вăл. „Ды слĕср. Не всакому слуху вер. К выставке мы пригодовили и диаграммы и плакаты... и мотели макеты. Для школу купили учепники тетрадьи... В сошло солнцо и все ошивилос. В текате тестат дней... Отоко телека сапела, что тавно декта не йела..." Çитменнине, учител хăй те йăнăш тăвать. Акă çав тетрадрех ученицă çырнă: „Число учащихся в средних школах поднялось с сто шестьдесят тысяч до четыре тысячи триста пятьдесят тысяч". Учител çапла тÿрлетет: „Число учащихся в средних школах поднялось с одной миллиона шестьсот тысяч до четыре миллиона триста пятьдесят тысяч". Тÿрлетнĕ те вара çавна!

Çавнашкал учител вырăс чĕлхине тĕрĕс вĕрентме пултараймасть. Пирĕн хăшпĕр учителсем хăйсем те хатĕрленсе çитмен, тивĕçлĕ пĕлÿ çук вĕсен. Хăшпĕр учителсем тата ĕçе çийелтен тăваççĕ. Учителсем час-часах хăйсем тума тивĕçлĕ ĕçе тумаççĕ, сăмахран, вырăс чĕлхипе калаçма вĕрентес тĕлĕшпе ĕçлемеççĕ. Вырăс чĕлхине вĕрентмели учебниксем çук, халăха çутта кăларас ĕç оргăнĕсем методикăлă ĕçе тумаççĕ. Çутĕç Халăх Комиссариачĕ буржуалă националиссем туса хăварнă сăтăрла ĕçсене пĕтерессишĕн кĕрешмест. Çавăнпа шкулсенче вырăс чĕлхине вĕрентес ĕç начар тăрать. Учителсем те вырăс чĕлхине начар пĕлеççĕ. Çутĕç Халăх Комиссариатĕнчи работниксем хăйсем те нумайĕшĕ вырăс чĕлхине начар пĕлеççĕ.

Тĕп ыйту—вăл кадăрсен ыйтăвĕ. Пирĕн учителсем хушшинче политикă тĕлĕшĕнчен шанчăксăррисем нумай пулни пурнишĕн те паллă. Çутĕç Халăх Комиссариачĕн кивĕ руководстви—кам вĕсем патне пырса учител пулса ĕçлес тенĕ, çавсене пурне те илнĕ. Ку вăл сăтăрлă ĕç пулнă.

Учителсен кадăрĕ тĕлĕшпе пирĕн халĕ те мухтанмалах мар-ха. Пирĕн 4-мĕш классене вĕрентекен учителсем вăтам шкултан вĕренсе тухнисем пулмала. Вăтам шкул пĕтернĕ учителсем пире 3206 çын кирлĕ пулсан, халĕ 1869 учител çеç пур. Вăтам шкулсенчи педагогикă кадăрĕсем йенĕпе ĕç татах та начартарах тăрать. Вĕсенче аслă шкулсенчен вĕренсе тухнисем 6128 çын пулмала, халĕ 654 çын çеç пур. Шкулсене çитес çулсенчех тивĕçлĕ кадăрсем парас тĕлĕшпе пирĕн питĕ нумай ĕçлемеле.

Малала çул-йĕр строительстви ыйтăвĕсем çинчен кĕскен каласшăн. 1937 çулта епĕр çулйĕр строительстви планне тултараймарăмăр. Вырăнти çулсем тăрăх плана 82 процент тултарнă, лайăхлатнă çулсене 35 километр, грави сарнă çулсене 11,5 километр, капиталљнăй строительствă тăрăх 158 километр туса çитереймен.

Çакăншăн кам айаплă? Шăмăршă, Куславкка, Сĕнтĕрвăрри, Канаш районĕсем т. ыт. те çулйĕр строительстви планне тултарассине аркатнă. Шăхсан, Улатăр, Пăрачкав районĕсем кăшт лайăхрах ĕçленĕ. 1937 çулхи уроксенчен епĕр хамăра вађљи тивĕçлĕ вывăдсем тунă-и? 1937 çулхи начар ĕçсенчен епĕр хамăра вађљи тивĕçлĕ урок туман. Çулйĕр строительстви ĕçĕ халĕ те начар пырать. Пирĕн план тăрăх 51 кубла метр чул хатĕрлемеле, епĕр иртнĕ çултан йулнисене шута илсен те, 12 пин кубла метр çеç хатĕрленĕ. 4.600 пин кубла метр хăйăр хатĕрлемеле пулнă, епĕр 46 пин куб. метр çеç хатĕрленĕ. Грави 32,5 пин кубла метр хатĕрлемеле пулнă пулсан, 5 пин кубла метр, йăвăç 43 пин кубла метр вырăнне 14 пин кубла метр çеç хатĕрленĕ. Уйрăм районсене илсен, Йетĕрне районĕ калама çук начар ĕçлет. Унăн 4,9 пин кубла метр чул хатĕрлемеле пулнă, 15 кубла метр çеç хатĕрленĕ. Хăйăр 42 пин кубла метр вырăнне 4 пин кубла метр çеç хатĕрленĕ. Йăвăç хатĕрлесси те чăтма çук начар тăрать. Çĕрпÿ, Канаш, Сĕнтĕрвăрри районĕсем те Йетĕрне районĕнчен уйрăм мар. Вĕсем те çулйĕр строительствинче тÿсме çук начар ĕçлеççĕ.

Çапла ĕнтĕ, çулйĕр тума материалсем хатĕрлесе хурасси питĕ начар тăрать. Çулйĕр строительстви вађљи материалсем хатĕрлеме хĕл вăхăчĕпе усă курмарăмăр. Халĕ ĕнтĕ çулла тарлама тивет. Çулйĕр çинчен нумай калаçатпăр, анчах конкретлă ĕç çук. Акă, çулсене хĕлле мĕнле пăхса усранине илĕр. Канашпа Шупашкар хушшинчи 80 километр çула та кăçал йĕркелĕ тытса тăраймарăмăр. Шупашкарпа Çĕрпÿ районĕсем çак çул çинчи йура тасатман пирки, пĕр вăхăт хушши çÿреме май çук пулчĕ.

Çулйĕр строительствинче ĕçлеме йалав

(Йулашки 4-мĕш страницăра).

Çурçĕр поlюсне çĕнсе илекенсем Украинăра

КИЕВ, апрелĕн 7-мĕш. (ТАСС). Çурçĕр поlюсне çĕнсе илекен хăйуллă та паттăр папанинĕçсем Совет Украинин столицине пайан йулашки кун хăналанă.

Папанин, Кренкĕл, Ширшов тата Федăрăв йулташсем Украинăри Коммунисĕсен (болшевиксен) Партин Кийĕв Обкомĕн пленумĕнче пулнă.

21 сехет те 40 минутра Папанин, Кренкĕл тата Федăрăв йулташсем Харькăва тухса кайнă. Вĕсене унта облăçри ĕçсынписем чĕннĕ.

Вокзалра папанинĕçсене УК(б)П Тĕп комĕн тата УССР правителствин йертсе пыракан работникĕсем ăсатса йанă.

Ширшов йулташ çĕрле Днепропетровска тухса кайат.

РСФСР Верховнăй Советне суйланă тĕле хутла пĕлмен çын пĕрре те пулмала мар

ЧЕЉАБИНСК, апрелĕн 7-мĕш. (ТАСС). Долматăв районĕнчи общăствăллă организацисем хăйсен умне халăх хутла пĕлменнине тата сахал пĕлнине çывăх вăхăтрах пĕтерес задачă лартнă.

Çак кунсенче Надеждă Константинăвнă Крупскайа долматовĕçсем патне çакан пек çыру йанă:

„РСФСР Верховнăй Советне суйланă тĕле хутпĕлменлĕхе йалтах пĕтерес тĕлешпе хăвăр çине илнĕ обйазатĕлствăна пурнăçа кĕртессе шанса тăратăп. Хутпĕлменлĕхе пĕтерес тĕлĕшпе ăмăртăва анлăн сарăр, çак ĕçе учителсене, политикăпа çутĕç работникĕсене тата районри културăллă вăйсене пурне те йавăçтарăр.

Çутĕç Халăх Комиссарĕн замеçтителĕ Н. К. Крупскайа."

Çак çырăва ăшшăн йышăнса илсе, колхозниксен районри сиесĕнче колхозпа совет активĕн ушкăнлă пухăвĕсенче тата вĕренекенсен мĕн пур групписсенче сутсе-йавнă. Хаlхи вăхăтра 140 группăра хутла пĕлменнисемпе сахал пĕлекенсем 3,033 çын вĕренеççĕ. Учитĕл-организатăр Коростенĕв йулташ тата, йалти актив тимлĕн ĕçленипе, Загайновск йалсоветĕ хутпĕлменлĕхе пуринчен те малтан пĕтернĕ.

Михейĕвсен çемйи Инçет-Хĕвел тухăçне пынă

Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи Хĕрлĕ йалавлă Уйрăм Çарăн мухтавлă танкисĕсен Михейĕв тăванĕсен ашшĕ Дмитрий Федăрăвич Михейĕв колхозник, Инçет-Хĕвелтухăçĕнче пулса, унта йаланлăх пурăнма куçма шутланă.

Мартăн 25-мĕшĕнче Михейĕвсен çемйи—çичĕ çын—Инçет-Хĕвелтухăç крайне тухса кайнă. Куйбышĕв облăçĕнчи Барыш районĕнчи ĕççыннисем, „XII лет Октйабрйа" йалхуçалăх ертелĕн колхозникĕсем вĕсене ăшă кăмăлпа ăсатнă.

Апрелĕн 7-мĕшĕнче мухтавлă патриотсен çемйи Хабаровска çитнĕ. Вокзалра вĕсене Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи Хĕрлĕ йалавлă Уйрăм Çарăн политикăллă управленин, „Тревога" йатлă çар хаçачĕн редакци представителĕсем тата Михейĕвсен танк екипажĕ пĕтĕм составĕпех кĕтсе илнĕ.

Михейĕвсен çемйи Хабаровскра 3—4 кун хушши пулнă хыççăн, Спаск районне йаланлăх пурăнма тухса кайнă.

(ТАСС).

Атăлстройра

Атăл çинчи Рыбинскипе Углич гидроузелсене тăвакансем çурхи шыв тулнине лайăх хатĕрленсе кĕтсе илнĕ. Пăр тапранас умĕн Рыбинскра Атăл урлă касма вăхăтлăха тунă кĕпере вунă кун выранне 38 сехет хушшинче сÿтсе пуçтарнă. Кăна çамрăк инженер Михейĕв йулташ йертсе пынипе тунă.

Строителствăра хĕл каçах бетон тата çĕр ĕçĕсене ĕçлеме чарăнман. Рыбинскри пĕвепе шlюзăсенче 150 пин кубла метр бетон хывнă. Шlюзăсенче камерăсене тата шыв йышăнакансене бетонлаççĕ.

16 мĕлйун кубла метр çĕр кăларнă та ĕнтĕ. Шексна йуханшывĕнче гидростанци ваlли хатĕрлекен тарăн котлованран çĕр кăларса пĕтереççĕ. Май уйăхĕнче кунта бетон хывма пуçлаççĕ.

Рыбинскра гидротехникăллă, хăй витĕр шыв йаман цемент ĕçлесе кăларакан савăт тăваççĕ. Стройкăра кислород туса кăларакан савăт лартаççĕ. Вăл пĕр сехетре арматурăна електросваркăпа çыпăçтарма 30 кубла метр кислород туса кăлармала пулат.

(ТАСС).

Грузи ССР искусствин выставки хупăннă

Нойабĕрĕн 17-мĕшĕнче Трайтйаковски галлерейăра уçăлнă Грузи ССР искусствин произведенийĕсен выставки хупăннă. Çав вăхăт хушшинче Грузин маçтăрĕсен картинисемпе тата скуlптурисемпе 255.663 çын паллашнă.

Хаl выставкăна Ленинграда илсе кайаççĕ.

(ТАСС).

Йавăр промышлĕннăç Халăх Комиссариачĕн коллегийĕ çинчен

ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Йавăр промышлĕннăç Халăх Комиссариачĕн Коллеги составне çак йулташсенчен çирĕплетнĕ: Коллеги председателĕ Халăх Комиссарĕ Л. М. Каганович йулташ, членсем: М. И. Целишчĕв, К. И. Бутенко, П. В. Кузьмин, М. Г. Первухин, П. П. Кучеренко, И. Г. Айнгорн, П. А. Жебелев, В. Н. Николайĕв, И. Г. Макарăв йулташсем.

Матвейĕв йулташ сăмахĕн йулашки

лăх бригадăсем организацилесси пысăк выйту. Сулйĕре штурмпа, субботниксемпе тума шутлакан йулташсем йанăшаççĕ. Тĕп услови—вăл çула йусаса тăма тата строителствăра ĕçлеме йаланлăх бригадăсем туни пулат. Тĕрĕссипе илсен çак бригадăсене организацилемен-ха, сăмахран, Патăрйел районĕнче пĕр бригадă та çук.

Çулйĕр работникĕсене вĕрентсе хатĕрлеме кăçал 112 пин тенкĕ укçа парат-пăр. Анчах, Улатăр, Çĕмĕрле, Тутаркас районĕсемсĕр пуçне, ытти районсем çулйĕр работникĕсен кадăрне хатĕрлес тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ.

Иртнĕ çулта халăх саккун тăрăх ĕçлемели ĕçе 4 мĕлйун тенкĕлĕх ĕçлесе çитереймен, çавна икĕ хут ÿстерсе шутласан 8 мĕлйун тенкĕ пулат. Пĕлтĕр колхозник йе йединоличник хăйĕн планне тултарман пулсан, унтан саккун тăрăх укçан шыраса илмеле, йе ĕçлеттермеле,—ахаlçĕрĕн халăха çулйĕр строителстви çине сийелтен пăхма вĕрентни пулат.

Халĕ ĕнтĕ епĕр çулйĕр ĕçĕпе мала тухнă мухтава çухатрăмăр. Епĕр лăплланса ларнă, мăн кăмăлланнă, çулйĕр строителствине организацилесе йертсе пыман. Халĕ тумали ĕçсем: çурхи шывсем тиçсен çулсене йĕркене кĕртмеле, кĕперсем тума тытăнмала, йаланлăх çулйĕр бригадисем организацилемеле, квалификацилĕ кадăрсене вĕрентсе хатĕрлемеле, ĕç повиннăçĕ тăрăх иртнĕ çулхи парăма шыраса илмеле.

Халĕ ĕнтĕ Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставки синчен. 1938 çулта август уйăхĕнче Мускавра Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставки уçăлат. Выставкă Совет Сойузĕ йалхуçалăхне социалисăмла урăхлатса çĕнетес ĕçре тунă çитĕнÿсене кăтартат. Ку çеç те мар, выставкă ССР Сойузĕнчи социалисăм строителствин пĕтĕм çитĕнĕвĕсене кăтартат, вăл Совет Сойузĕнчи халăхсем хăйсен историлĕ çĕнтерĕвĕсем çинчен пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисем умĕнче отчот туни пулат.

Выставкă хутшăнасси кашни районăн, кашни колхозăн, кашни бригадăн хисеплĕ ĕçĕ пулат. Епĕр 1937 çулта вăйлă тырпул туса илтĕмĕр, республикă вăтам шутпа гектартан 15,6 центнĕр тырă туса илнĕ. Пирĕн республикă выставкăна хутшăнасшăн тесе епĕр зайавкă патăмăр. Выставкăн тĕп комитечĕ пирĕн республикăри 98 колхоза çирĕплетнĕ. Анчах ку сахал-ха. Епĕр тата ытларах тăратма пултарнă. Тутаркас районĕнче 128 колхоз, вĕсенчен 90 колхозĕ выставкă хутшăнма пултараççĕ, анчах 20 колхоз çеç зайавкă панă.

Шăхасан районĕнче 60 колхоз, вĕсенчен 29 колхозĕ выставкă тăма тивĕçлĕ, анчах икĕ колхоз çеç зайавкă панă. Патăрйел районĕнчи 49 колхозран 47 колхозĕ выставкă хутшăнма тивĕç, çав вăхăтрах 26 колхоз çеç зайавкă панă.

Выlăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри çитĕнÿсене кăтартасси тата та начар тăрат. Ишлей, Сĕнтĕрвăрри, Пăрачкав, Çĕрпÿ, Шăмăршă, Шăхасан, Шăнкăртам, Йетĕрне районĕсем çеç зайавкăсем панă. Ытти 17 район пĕр зайавкă та паман. Выставкăна ытти çулсенчи кăтартусем тăрăх çеç мар, 1938 çулхи кăтартусем тăрăх та хутшăнтараççĕ. Пирĕн çак правашăн кĕрешмеле. Иртнĕ çулта лайăх ĕçленĕ пулсан та, кăçал начар ĕçлекенсене выставкăран кăларăççĕ. Пирĕн 1938 çулхи çуракине лайăх хатĕрленсе иртермеле, халĕ ĕçре палăракан çитменлĕхсене хăвăрт пĕтермеле. Çуракине кăтартуллă иртермеле пултăр.

Ÿкерчĕк çинче: Осоавиахимăн 12-мĕш лотерейĕ тĕлне кăларнă А. Беlский художник плакачĕ.

(Сойузфото репродукцийĕ).

Испани правителствине реорганизациленĕ

Парижрен пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 5-мĕшĕнче Испани правителствине реорганизациленĕ. Çĕнĕ правителствăна çак составпа йĕркеленĕ: министрсен Совечĕн председателĕ тата оборонă министрĕ — Хуан Негрин (социалис), йутçĕршыв ĕçĕсен министрĕ — Алварес деl Вайо (социалис), шалти ĕçсен министрĕ — Паулино Гомес (социалис), çĕрĕç министрĕ — Висенте Урибе (коммунис), йустици министрĕ — Гонсалес Пеlйа (пĕтĕмĕшлĕ рабочи сойуз), сутĕç министрĕ — Секундо Бланко (Ĕçĕн нациллĕ конфедерацийĕ) т. ытти те.

Пĕтĕмĕшлĕ рабочи сойуз тата Ĕçĕн нацилĕ конфедераци представителĕсене кĕртнине правителствăна халăх фрончĕн мĕн пур организацисен представителĕсем кĕнĕ.

Çĕнĕ правителствă республикă бойецĕсене тата халăха, çавнашкалах тата фашиссемпе интервентсем тытса илнĕ территорисенчи халăха манифестпа чĕнсе каланă. Манифестра Испани никама пăхăнса тăрас марришĕн татăклă кĕрешессипе çинчен каланă.

Испанири коммунисла партин Политбÿровĕ çакăн пек зайавлени пичетлесе кăларнă:

„Политбÿро республикă правителствине реорганизацилениле пĕтĕмĕшпех ырлат. Вăл чăн-чăн нацилĕ пĕрлешÿ правителстви. Политбÿро правителствăна икĕ професойуз организаци представителĕсем кĕнипе саламлат. Правителствăна çав представителĕсем кĕни халăх фрончĕ малала тĕреклешнине палăртса тăрат. Испани никама пăхăнса тăрас марришĕн тата ирĕклĕхшĕн пĕтĕмĕшпех çĕнтеричченех татах та татăкларах кĕрешмели татăклă минутра мĕн пур йурăхлă çынсене фронта йама мобилизацилеме кирлĕ, заводсене мĕн май пур таранах ĕçлеттермеле тумала, пĕтĕм çĕршыва вăрçă чухнехи пек лару-тăрува куçарма кирлĕ".

(ТАСС).

Деl Вайо сăмахĕ

БАРÇЕЛОНА, апрелĕн 7-мĕш. Йутçĕршыв ĕçĕсен министрĕ деl Вайо йутçĕршыв журналисĕсемпе пулнă калаçура çапла каланă: „Çĕнĕ правителствă чăн-чăн нацилĕ пĕрлешÿ правителстви пулса тăрат. мĕншĕн тесен, ку правителствăпа халăх фрончĕн пур организацисен представителĕсем те кĕреççĕ. Правителствăн хăйĕн составĕ тĕлĕшĕнчен илсен, пăлхавçăсемпе интервентсене хирĕç кĕрешессинче çĕршывăн пур ресурсисемпе тата кашни уйрăм çынăн вăйхалĕпе усă курма пысăк майсем пур. Правителствă чи малтан мораl тĕлĕшĕнчен çирĕп пулни çине шанса тăрат".

„Нихăçан илтмен намăссăрлăхпа пĕтĕм тĕнчери правă çине тапăнса ирĕксĕрлекенсене" хута кĕрекен хăшпĕр государствăсене кăтартса парса, деl Вайо çапла каланă:—„хăйсене лайăх пултăр тесе пĕтĕм тĕнчери правăпа пăсакансем, Испанине ирĕксĕрлекенсем, Испани халăхĕ ирĕклĕнех парăнĕ тесе никам та ан шутлатăр. Испанири вăрçă вăхăтĕнче политиксем тунă чи пысăк йанăш вăл — Испани халăхĕн хирĕç тăрас вăйне хакламанни. Пĕтĕм тĕнчене тĕлĕнтерсе Мадрид хирĕç тăнин тĕслĕхĕсене аса илчĕр. Каталони халăхне пĕлес пулат, Каталони те паттăрăн хирĕç тăма пултарат. Çĕнĕ правителствă пуçпулса йертсе пыракан испанĕçсене никам та çĕнтерме пултараймаст, вĕсем никама пăхăнман ирĕклĕхе сыхласа тăраççĕ. Правителствă кĕрешÿре çĕнтерессине шанса тăрат".

(ТАСС).

Англи халăхĕ Испани республикне пулăшма ыйтат

Лондăнран пĕлтерни тăрăх, Итали Англине „вăрçăра Франко генерал çĕнтерсенех" Испанирен хăйĕн çарĕсене чĕнсе илме сăмах панă.

Агрессăрсемпе килĕшÿлĕ пулса пыракан Англи правителствин политики Англи ĕççыннисене тарăхтарат.

Машинă тăвакансен професçилĕ сойузĕ Испани ыйтăвĕ тăрăх манифест пичетлесе кăларнă, ку манифестра: Испанири рабочисен ĕçĕ—Британи рабочийĕсен ĕçĕ те пулат,—тесе каланă.

Интернационаллă бригадăн çапăçăвĕсенче пулса, аманнă Уеlс горlакĕсем тавăрăнни Кăнтăр Уеlсри горlаксем хушшинче вăйлă хум çĕкленĕ. Горlаксем Испани ыйтăвĕ тăрăх пулса пыракан Англи правителствин политикине хирĕç забастовкă организацилес ыйтăва лартнă. Вĕсем—„Испани правителствин хĕçпăшал пулмалах" тесе калаççĕ.

Англи ĕççыннисем Испани правителствине хÿтлес тĕлĕшпе мерăсем йышăнма ыйтаççĕ.

Францире забастовкă йухăмĕ вăйланса пырат

Парижре такси çинче ĕçлекен шоферсем кĕске вăхăтлăх забастовкă пуçласа йанă, вăл забастовкăна вĕсем предпринимателсем такси çинче çÿренĕшĕн 30 процент ÿстерсе укçа илме шутланине хирĕç протеслесе тунă. Шоферсем çавăн пекех тата ĕççĕрлĕхе хирĕç те протеслеççĕ, Францире 2.600 шофере йахăн ĕççĕр пурăнат.

Лион тата Лимож хулисенчи ată-пушмак хапрăкĕсенчи 5.200 рабочи, пĕр уйăх хушши забастовкă тунă хыççăн хăйсен ĕçукçине ÿстерме ыйтнине пурнăçа кĕртерме пултарнă.

Париж районĕнчи машăнасем тăвакан предприйатисенчи рабочисен забостовки сарăлса пырат. Париж çывăхĕнчи чылай савăтсенчи рабочисем, 150 рабочине ĕçрен кăларса йанине хирĕç протеслесе, забастовкă пуçласа йанă. Автомобил савăчĕсенче 9 пин ытла рабочи забостовкă туса предприйатисене йышăнса илнĕ.

Париж районĕнче забастовкă тăвакан рабочисен пĕтĕм хисепĕ 45 пин çынна çитет.

(ТАСС).

Китайри троцкиссен провокацилĕ ĕçĕсем

Сингапурта пурăнакан Китай патриочĕсем (Сингапур—кăнтăр-китай тинĕсĕнчи утрав, вăл Англи аллинче тăрат) Йапони захватчикĕсене хирĕç кĕрешекен хăйсен Китайри тăванĕсене чылай пулăшу пăраççĕ. Вĕсем тĕп Китай правителстви кăларнă займа 30 мĕлйун долларлăх ытла çыраннă тата Йапони агрессăрĕсене хирĕç кĕрешме çапăçу отрйачĕсем организациленĕ. Анчах та Сингапурта пурăнакан ирсĕр сутăнчăксем, Китай халăхĕн ылханлă тăшманĕсем—Китай троцкисĕсем Китай халăхĕн патриотла йухăмне пур майсемпе те аркатма хăтланаççĕ, Англин выранти власĕсене Китай халăхĕ çине вĕскĕртеççĕ. Кăçал йанвар уйăхĕнче 10 пин китайеç Йапони захатчикĕсене хирĕç демонстраци организацилесшĕн пулнă, анчах та троцкиссем вăл демонстрацине аркатса йанă: темиçе лавка çĕмĕрсе тăкнă, урамри хунарсен кантăкĕсене ватнă. Çакăн пек провокацине пула, Англи власĕсем пĕр айăпсăр китайеçсене 100 çын арĕсленĕ. Сингапурти китай çыннисем Китай троцкисĕсен провокацилĕ ирсĕр ĕçĕсем пирки хытă тарăхаççĕ.

Государствăна аш-какай, сĕт-çу тăратас тата государствăна аш-какайпа сĕт-çу сутас плана Чăваш республикĕнче мĕнле тултарса пынине кăтартакан

СВОДКĂ

(1938 çулхи апрелĕн 1-мĕшне) процентпа

Район йачĕсем	Аш-какай тăратнă.	Сĕт-çу тăратнă	Аш-какай сутнă	Сĕт-çу сутнă
Улатăр	33,5	11,4	21,3	3,5
Елĕк	17,4	5,4	1,3	3,9
Патăрйел	14,9	5,3	30,4	1,5
Вăрнар	18,1	6,3	4,0	—
Йĕпреç	11,0	4,8	1,3	—
Ишлей	21,3	4,9	3,2	0,1
Канаш	18,1	6,5	7,3	0,2
Куславкка	7,8	7,5	1,2	1,0
ХĕрлĕЧутай	6,6	4,2	7,4	0,2
Кувакинă	17,7	3,0	—	—
Сĕнтĕрвăрри	9,9	2,0	2,0	0,3
Пăрачкав	13,1	3,6	3,1	1,2
Турхан	19,0	2,7	1,6	1,0
Тутаркас	14,6	11,2	1,1	3,3
Трак.	18,3	2,4	2,2	0,2
Вăрмар	9,2	8,4	7,2	—
Çĕрпÿ	13,3	9,5	2,2	9,2
Шупашкар	19,0	13,7	3,0	1,5
Шăмăршă	18,7	5,3	1,0	3,7
Шăхасан	16,7	5,5	0,1	8,6
Шăнкăртам	30,3	13,1	—	—
Çĕмĕрле	14,4	4,7	0,4	12,6
Йетĕрне	18,6	16,0	1,6	0,1
Йелчĕк	28,7	13,0	—	2,4
Тăвай	16,9	4,5	1,3	—
Пĕтĕмпе	16,2	7,4	4,6	2,7

Бригадă организацилерĕç

ÇĔРПУ. Кăшаркассинчи „Пионер" колхозра çулйĕрсене лайăх пăхса усрама, çурхи шыв кĕперсемпе çулсене çĕмĕрсе кайасран сыхлама 5 çынтан бригадă йĕркелерĕç. Ку бригадă çумне икĕ лаша çирĕплетсе панă. Бригадă шыв йухмали выранĕсене усса хатĕрленĕ. Бригадăна Г. Андрейĕв йулташ йертсе пырат.

А. Иванов.

Студентсем производствăлă практикăра

ЙЕТĔРНЕ. Çак кунсенче йалхуçалăх техникумĕнче 4-мĕш курсра вĕренекен 30 студент колхозсене производствăлă практикăна саланчĕç.

П. Здорнăв.

МОПР йачейки

ШĂХАСАН. Çак кунсенче Çĕнĕ Пинерти „Пинер" колхозра 45 члентан МОПР йачейки организацилерĕç. Колхозниксем йачейкă руководителне колхоз председателне Журавlов йулташа суйларĕç.

Йачейкă членĕсем колхозниксем хушшинче тĕнчери лару-тăру çинчен 3 хут калаçу туса иртерчĕç.

Чернов.

382 екземпlяр илеççĕ

Кăшаркассинчи (Çĕрпÿ р.) „Пионер" колхозри Кудрйашов почтаlйон колхозниксемпе йединоличниксем хушшинче хаçат-журнал сарассипе тăрăшса ĕçлет. Çыраннă хаçат-журналсене подписчиксем патне вăхăтра çитерет. Вăл ĕçлекен йалсенчи 300 хуçалăх 382 екземпlяр хаçат-журнал çыранса илеççĕ.

Ив. Садыкăв.

Хулиганла ĕçсемшĕн

Виçпÿрт Шăмăршăри (Шăмăршă районĕ) „Правда" колхозра Александр Çмирнов 1934 çултанпа бригадирта ĕçленĕ. Ку вăхăтра вăл хулиганла ирсĕр ĕçсем туса çÿренĕ.

1936 çулхи май уйăхĕнче, Çмирнов ÿсĕрпе колхозăн лаша витине пырса: „мансăр пуçне лашасене никама та парса йама пултараймастăр, епĕ колхоз патши!„—тесе Айгарăв коlуха хĕненĕ. Ун чухнех аслă коlуха—Муллина 3—4хут çапнă.

1937 çулта çентăбĕр уйăхĕнчен пуçласа вăхăтлăха колхоз председателĕ пулса ĕçленĕ. Октăбĕрĕн 4-мĕшĕнче ÿсĕрпе каллех колхозăн лаша витине пырса Кузьмин коlуха: „есĕ мĕншĕн лашасене лайăх пăхмастăн!", тесе çывăрнă çĕртĕн тăратса пĕр айăпсăр хĕнесе пĕтернĕ. Кун хыççăн Кузьмин ĕçлеме йурăхсăра тухнă. Çав каçхине вăл колхозăн аратлă айăрне кÿлсе тухса йал тăрăх хытă чуптарса çÿресе укçах тунă. Поçпелăв колхозникăн кантăкне çапса ватнă. Хăй урам тăрăх: „Епĕ кам?! Епĕ йал патши!„тесе кăшкăрса çÿренĕ.

Мартăн 18-мĕшĕнче Шăмăршă районĕнчи халăх сучĕ Çмирновăн ирсĕр ĕçĕсене пăхса тухса, Уголовлă Кодексăн 2 пайĕнчи 110 статйи тăрăх айăпласа, икĕ çул хушши тĕрмере хупса усрамала турĕ.

И. Филиппăв.

Библиографи

Усăлă кĕнеке

С. ЕЛКЕР.—„Вăрçă кунĕсем". Асаилнисем (мемуарсем). Шупашкар. Чăвашиздат. 1937-мĕш çул. Тиражĕ — 3.000. 372 стр. Хакĕ 5 т. 30 пус.

„Вăрçă кунĕсем"—1914—18 çулсенчи империалисăм вăрçинче тата февраl революцийе ун хыççĕнхи кунсенче автăр хăй курни-илтнисем çинчен çырнă кĕнеке. Кĕнеке виçĕ уйрăмран: **„Фронтра", „Тыткăнра"** тата **„Вăрçа хирĕç—вăрçă"** йатлă пайсенчен тăрат.

„Вăрçă кунĕсем" мемуар (ăна повеç теме те пулат)—сахал пĕлекен хресчен ывăлĕ, тĕнче вăрçипе революци вучахĕсем витĕр тухса, идеологи тĕлĕшĕнчен ÿссе çитĕннипе кăтартат. Ку хресчен ывăлĕ малтан тĕнче вăрçи мĕнрен тухса кайнине те пĕлмест, кайран, революцилĕ рабочисемпе хутшăнса, вăрçă кăларакан сăлтавсене пĕлсе çитет. Çаксем хыççăн, халăха пĕтерекен вăрçăсем нихăçан та ан пулччĕр тесен мĕскер тумалине те ăнланса илет вăл. Ку шухăша тĕппех ăнланса çитнине çак хресчен ывăлĕ хăй маттăр салтакĕпе калаçнă вăхăтра кăтартса парат.

„Ку калаçăва Барта (маттăр салтакĕ) татса хучĕ:—Халĕ ĕнтĕ пĕлетпĕр мĕскер тумалине. Ĕмĕртен ĕмĕр вăрçăсăр, килĕшÿлĕ пурнăç туса хума—пĕртен-пĕр çул çеç: вăл коммунисăм çулĕ. Ку çул çине тухма—тĕнчипех пролетарилĕ революци тумала,—тет вăл хулăм сассипе.

— Тĕрĕс, Бартă!.. çавăнпах Совет власĕшĕн çапăçатпăр та епĕр,—килĕшет унпа ротă командирĕ.

Бартапа командир сăмахĕсем мана хамăн шухăша каланă пекех туйăнчĕç. Çавăнпа епĕ вĕсене ырласа кĕскен хушса хутăм:

— Чăн! Ĕмĕрлĕхех килĕшÿ пултăр тесен, тĕнчипех пролетарилĕ революци тумала..."

Çапла калат йулашкинчен хресчен ывăлĕ. Анчах та, ку сăмаха каличчен малтан, унăн тăвата çул хушши—вăрçă вучĕсем витĕр писсе тухмала пулнă.

Вăл—Карпат тăвĕсем çинче тискер вăрçă хăрушлăхĕсемпе тертленет, думдум пуlкăпа суранланат, тыткăпа лекет, вăрçă вучĕпе тивсе кайнă халупкăсенчен аран-аран çăлăнса тухат. Унтан—вăрçă хирĕнче хырăмпа шуса çÿрет, ăна пловинисăмпа урнă пимĕç салтакĕ чиксе пăрахма тăрат, госпитаlпе лагерсенче выçă хăщкăлат, темиçе хут та вилĕм алăкĕ умĕнче тăрат... Çаксем пурте пĕр çын асапĕ çеç мар, пин-пин çынăн асапĕ, мĕлйунлă массăн хĕн-хурĕ пулнă. Çаксем çинчен Елкер ĕнентерÿлĕ, витĕмлĕ, чĕрене илмеле чĕрĕ чĕлхепе сăнласа çырнă. Çавăнпа та вĕсем вулаканăн сисĕм-туйăмне тытса илсĕ, ăна сÿçентерсе, хумхантарса йараççĕ.

Пĕр сăмахпа каласан, „Вăрçă кунĕсем" мемуарта—тĕрлĕ клас, тĕрлĕ сий, тĕрлĕ паци, тĕрлĕрен парти, тĕрлĕ професси представителĕсем курăнаççĕ. Хĕрарăмсен образĕсене Клавди, Каталина, Анĕчкă урлă куратпăр. Ку сăнлăхсем пурте хăйне йеверлĕ уйрăмлăхсемпе, уйрăм кăмăлсемпе, туртăмсемпе, ăс-хакăлсемпе чĕррĕн курăнса иртеççĕ.

Мемуарта вăрçă сăн-питне, патша çарĕ арканнине, революци тăвакан массăна тата ыттине те автăр тĕрĕссипе, чăннипе сăнласа çутатса пама тăрăшнă. Унăн „Вăрçă кунĕсем" произведенийĕ çĕршывăн тăшманĕсемпе хайаррăн кĕрешме хавхалантарат. Мемуарта çутçанталăкпа çĕршыва илемлĕн картинласа кăтартнă. Сăмах çаврăнăшĕсем — йака, чутланса, пултаранса тухнă. Содержани йенчен те вăл, автăр хăй тÿсни-чăтнисене сăнласа панă пирки, çав тери ĕнентерÿлĕ. Çавăнпа калама йурат: Елкер реалисăм çулĕ çинче çирĕппĕн тăрат. Вăл çырнине вуланăçемĕн вулас килет.

Е. Романăвă.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНАВ.

Академи театрĕнче

Апрелĕн 9-мĕшĕнче

ПРЕМЙЕРĂ

Чăвашла спектакl

П. Н. ОÇИПĂВ

„АЙДАР"

(5 пайлă, прологлă)

Аслă режиççор

К. И. ИВАНОВ

тата режиççор

Н. С. АЙЗМĂН лартаççĕ.

Художник

Йе. Н. САПОЖНИКĂВ.

Спектаклре музыкăна Государствă филармонийĕ выlат.

Дирижор—. ЙЕГОРĂВ.

Талон № 161.

Абонемент № 7 талон № 15.

Кассă кăнтăрла 3 сехетрен уçă. Спектакl каçхине 8 сехет те 30 минутра пуçланат.

„Чăваш Коммунĕ" çыранса илмели хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 179. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста, Заказ № 301. Тираж 16.250 экз. П. 6. 85—94 см. 1—1 п: л